Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
АВГУСТ
18
КĔҪНЕРНИКУН
190 (5003) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш ҫул тухаҭ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаҫачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 5—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—5—65, ялхуҫалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—5—88, промышлĕннăҫ пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Социалисăмла ҫĕршывăн авиацийĕ

Пайан—Совет авиацин уйавĕ. Аслă Совет халăхĕ ҫак куна савăнаҫлăн та мухтавлăн уйавлаҭ. Пайан пирĕн ҫĕршыв хăйĕн авиаци вăй-хăватне сăнаса тухаҭ. Пайан пирĕн халăх сывлăшри паттăрсене — ђотчиксене, пилотсене, авиаци ҫынĕсене, социалисăмлă тăван ҫĕршыва, бођшевикла партине, ҫĕр ҫинче те, тинĕсре те, сывлăшра та ўсĕмлĕн ĕҫлеме ҫунатлантаракан, ҫĕнтерў хыҫҫăн ҫĕнтерў тума хавхалантаракан аслă Сталина пĕтĕм чĕререн-кăмăлтан йуратнине татах та татах уҫҫăн кăтартаҭ.

Никам ҫĕнтерейми вăйлă пирĕн ҫĕршыв. Сталинла икĕ пилĕкҫуллăх ҫулĕсенче Совет Сойузĕ—вăйлă авиацилĕ ҫĕршыв пулса тăчĕ.

Пирĕн ĕлĕк авиаци промышлĕннăҫĕ пулман. Патша Роҫҫийĕнчен совет республикине кивĕ, хăрăк самођотсем ҫеҫ йулнă. Ахађтен мар ĕнтĕ вĕсене унчухне „вилĕм тупăкĕсем" тенĕ.

Совет Сойузĕн халĕ вăйлă авиаци промышлĕннăҫĕ пур. Вăл ҫулран ҫул тĕреклĕнсе пыраҭ. Пирĕн авиаци промышлĕннăҫĕ ҫамрăк пулсан та, чи инҫе, чи ҫўле, чи хăвăрт вĕҫекен самођотсем кăларма пултараҭ. Пирĕн самођотсен пахалăхĕ, чăтăмлăхĕ, авиацин вăй-хăвачĕ пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерет. Вăл самођотсене хамăрăн материалсенчен, хамăр савăтсенче, совет инженерĕсемпе конструктăрĕсем, хамăрăн рабочисем тунă.

Совет авиацин техники ăста, пултарулă, талантлă ҫынсен аллинче. Пирĕн сывлăшра вĕҫекен паттăрсем—тĕнчери чи лайăх авиатăрсем. Хăйсен ĕҫне лайăх пĕлекен, йуратакан ђотчиксен, пилотсен ҫарĕ питех те пысăк. Вĕсем—мухтавлă ăмăрт-кайăксем—хăйуллă, чăтăмлă, хастар ҫынсем, партипе правителствă ăҫта кайма хушаҫҫĕ, ҫавăнта вĕҫме пултараҫҫĕ. Вĕҫеҫҫĕ вĕсем кăнтăрла та, ҫĕрле те, шăрăхра та, сивĕре те. Хăрушă мар вĕсене аҫа-ҫиҫĕм, тĕтре, вăйлă ҫил-тăвăл.

Пирĕн халăх—паттăр халăх. Халăх мĕнле—ҫавăн пекех унăн ђотчикĕсем те. Ҫар ђотчикĕсем хушшинче Совет Сойузĕн геройĕсем 36 ҫын. Совет Сойузĕн аслă наградине—Ленин орденне илнисем—188 ҫын, Хĕрлĕ йалав орденĕлисем—513, Хĕрлĕ ҫăлтăр орденĕлисем—473, Знак Почета орденлисем—182 ҫын. Кам илтмен, кам пĕлмест Совет Сойузĕн геройĕсене—Чкалăва, Громăва, Водопйанăва, Молокăва, Беђаковa, Байдукова, Данилина т. ыт. те? Вĕсен йачĕпе пĕтĕм ҫĕршыв мухтанаҭ!

Совет ђотчикĕсем вĕҫсе ҫитме пултарайман вырăн тĕнчере ҫук. Етемлĕх ĕмĕр-ĕмĕр ĕмĕтленнĕ Ҫурҫĕр пођусне бођшевиксем—совет ђотчикĕсем ҫĕнсе илчĕҫ. Етемлĕх историйĕнче пирвайхи хут пирĕн ђотчиксем Ҫурҫĕр пођусĕ урлă Америка вĕҫсе каҫма пултарчĕҫ. Паттăр Совет ђотчикĕсем челўскинецсене ҫăлни, Мускавран Удд (халĕ Чкалăв) утравне хăйуллăн вĕҫни, Коккинакипе Брйандинский йулташсен пĕр талăк хушши пĕр чарăнмасăр вĕҫсе Мускавран Владивосток районне ҫитни, сывлăша ҫĕтурмăлакан хĕрарăмсем—Оҫипенко, Ломако тата Раскова йулташсен гидросамођотпа Хура тинĕсрен Шурă тинĕсе ҫитиччен хăрсăрăн вĕҫни—ҫаксем вĕсем совет авиаци кунҫулĕсенчи ĕмĕр манми вăйлă, ҫутă кунсем. Ку ҫутă кунсем те инҫе ĕмĕрсен кунҫулĕсем урлă паларса, нихҫан сўнми ҫуталса тăрĕҫ. Ҫулсем иртĕҫ, пайанхи рекордсене пирĕн авиаци таҫтах инҫе, кăйа тăратса хăварĕ, ҫапах та ҫак хисеплĕ, паха ĕҫсене пулас ăру йалнах савăнса аса илĕ.

Совет авиацийĕ—социалисăмлă ҫĕршыв оборонин ҫирĕп вăйĕ, мирлĕ, лăпкă саманашăн, куђтурăллă ўсĕмшĕн, етемлĕх аталанăвĕшĕн кĕрешмели мăйлă хĕҫпăшал.

Пачах урăхла пирĕн чикĕ леш йенче. Фашиссен авиацийĕ Испанипе Китайри мирлĕ халăхсене вĕлерет.

Хађхи вăхăтра пурăнакан халăхсен мĕн пур хисепĕнчен виҫҫĕмĕш пайне вăрҫа хутшăнтарнă. Фашиссем хĕвеланăҫĕнче те, хĕвелтухăҫĕнче те вăрҫă пушарне чĕртсе йарса, мирлĕ хуласене, йалсене ҫунтараҫҫĕ, мирлĕ халăха пĕтереҫҫĕ. Йапони самурайĕсем, урнă йытăсем, Совет Сойузне вăрҫа хутшăнтарасшăн пулса, пирĕн ҫине тапăнса пăхрĕҫ. Анчах вĕсен аллисем кĕскерех! Пирĕн чикĕсене ҫирĕп ҫăрапа питĕрнĕ. Паттăр красноармейĕцсем, ђотчиксем вĕсене нумайччен асăнмалăх пысăк урок кăтартрĕҫ, кирлĕ пулсан татах та кăтартĕҫ.

Пирĕн ҫунатлă машинсем мирлĕ ĕҫсенче ĕҫлеҫҫĕ: пассажирсене илсе ҫўреҫҫĕ, пуштă ҫўретеҫҫĕ, хаҫат-журналсем, апат-ҫимĕҫсем, емелсем турттараҫҫĕ, чирлĕ ҫынсене тухтăрсем патне, тухтăрсене чирлисем патне илсе кайаҫҫĕ, йалхуҫалăхне сийĕнлекен, вăрмана сăтăрлакан хурт-кăпшанкăсемпе, сивĕ чир йĕртекен вăрăм тунасемпе кĕрешеҫҫĕ, пăрлă вырăнсенче карапсене ҫул кăтартаҫҫĕ, пулă тытакан суднăсене пулăлă вырăнсем тупса параҫҫĕ т. ыт. те. Кирлĕ вăхăтра, партипе правителствă хушсан, пирĕн ђотчиксем граждăнла самођотсенчен ҫар машинĕсем ҫине куҫса ларĕҫ, тăшмана хăйĕн ҫĕршывĕнчех пĕтерме тухса кайĕҫ. Ҫакна йаланах астуса тăччăр етемлĕх тăшманĕсем — ылханлă фашиссем!—хађхи вăхăтри ҫынҫийенсем.

Пирĕн авиаци улăп утăмĕсемпе ўсse пыраҭ. Хастар ђотчиксен ҫарĕ хăвăрттăн йышланаҭ. Совет ҫамрăкĕсем—арҫынсем те, хĕрсем те—Осоавиахим организацилĕнĕ аероклубсенче производствă ĕҫĕнчен татăлмасăр авиаци спортне вĕренеҫҫĕ. Авиаци спорчĕ—ҫамрăксен йуратнă ĕҫĕ пулса тăчĕ. Авиаци ĕҫне вĕренесси пирĕн республикăра та анлăн сарăлнă. Шупашкарти аероклуб иккĕмĕш хут ĕнтĕ ђотчиксен ушкăнне вĕрентсе кăларчĕ. Тунă ҫитĕнўсемпе никам та лăплланмĕ. Ҫĕршыв авиаци шкулĕсенчен татах та лайăхрах ĕҫлеме ыйтаҭ. Ҫĕршыва пиншер ҫунатлă ҫынсем—ђотчиксем, пилотсем, бортмеханиксем, штурмăнсем, радиссем т. ыт. кирлĕ. Планерисăм ĕҫне анларах сарар, авиомоделиссен кружокĕсен ĕҫне вăйлатар. Совет ҫамрăкĕсем—самођот ҫине! Совет сойузĕн сывлăш флотне татах ҫирĕплетер.

Халăх тăшманĕсем авиаци ĕҫĕнче сахал мар сăтăр кўнĕ. Тискер фашисла бандитсем аероклубсене кирĕвсĕр ҫынсемпе тултарнă, Осоавиахим ĕҫне, массăлă авиаци ĕҫне пĕтерсе лартма тăнă.

Ирсĕр тăшмансен тĕп йăвисене пĕтертĕмĕр! Халĕ пирĕн Осоавиахим ĕҫĕнче бођшевикла йĕркелĕх кўртмелле, клас тĕлĕшĕнчен йурăх ăр етемсенчен тасалса ымалла. Партипе комсомол, Осоавиахим организацисен пайанхи хисеплĕ задачи—вăл авиаци ĕҫне, сывлăш спортне вăйлăн сарасси.

„Кам сывлăшра вăйлă, ҫав пирĕн вăхăтра пур йенчен те вăйлă" (Ворошилăв).

Вăйлă та хăватлă совет авиацийĕ! Тата та вăйлăрах, тата та хăватлăрах пултăр вăл! Инҫе те хăвăрт вĕҫеҫҫĕ совет ђотчикĕсем. Сталин йуратăвĕпе, халăх кăмăлĕпе хавхаланнăскерсем, тата та инҫерех, тата та ҫўлерех, тата та хăвăртрах вĕҫчĕр вĕсем!

Германире маневрсем пуҫланнă

Августăн 15-мĕшĕнче Германирĕ маневрсем пуҫланнă, унта регуђарлă чăҫсенчи 750 пин салтак тата ҫавăн чухлех резервисем хутшăннă.

Ҫак маневрсем (унта Гитлĕр та хутшăннă) пурнăчен ытла Чехословаки тата Франци чиккисенчи районсенче пулса пыраҫҫĕ.

Чехословакири хаҫатсем—Германи влаҫĕсемпе ҫар командованин хăйă распорйаженийĕсем ку вăл маланх пĕк маневрсем мар иккине кăтартса параҫҫĕ, ку вăл—ҫăвалă мобилизаци, вăл Чехословакине хăратас шутпа, унтан ҫĕнĕ уступкăсем илес шутпа тунă, тесе палăрă тăваҫҫĕ.

Гитлĕр агенчĕсем—генлейнăвецсем, Судет облăҫĕнче террорлă ĕҫсемпе провокацисене вăйлатса йанă, вĕсем уҫҫăнах хĕҫпăшаллă выступлени хатĕрлеҫҫĕ.

Германире маневрсем пуҫланни Чехословакири халăха пысăккăн шиклентерет.

(ТАСС).

Сойуз Совечĕпе Национађнăҫсен Совечĕн августăн 10-мĕшĕнче пулнă пĕрлешўлĕ ларăвĕ.
ЎКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Лару президиумĕ. Сулахайран: Т. Д. Лыҫенко, А. А. Андрейĕв, Н. М. Шверник тата Г. Асланăвă йулташсем.
Й. Халип фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото)

ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Ҫеҫҫийĕ

Августăн 16-мĕшĕнче пулнă ларусен дневникĕ

Сойуз Советĕнче

Августăн 16-мĕшĕнче кăнтăрла Сойуз Совечĕн улттăмĕш ларăвĕ пулнă.

Ложăсем ҫинче партипе правителствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем.

Кун йĕркинче—„ССР Сойузĕн сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройствă саккунĕн" пройекчĕ ҫинчен тунă доклад тăрăх пыракан пренисем. Пренисенче Леонăвă, Вышинский, Худайбергенăв, Катайевă, Леденцов депутатсем тухса калаҫҫĕ. Тухса калакансем пурте судоустройствă саккунĕн пройекчĕшĕн тăраҫҫĕ тата вăл саккун совет судне малашне татах лайăхлатас ĕҫре, суда массăсем патне ҫывхартас ĕҫре пысăк вырăн йышăнса тăнине палăрă тăваҫҫĕ. Ҫавăнпа пĕрлех тата пренисенче Йуҫтици Халăх Комиссариачĕн ĕҫĕнчи пысăк ҫитменлĕхсене палăртнă. Йуҫтици Халăх Комиссариачĕ хăйĕн вырăнсенчи оргăнĕсене начар йĕртсе пынине, суд кадрĕсем хатĕрлĕс тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫленине тата судри ĕҫсене пăхса тухассине хăвăртлатас тĕлĕшпе кирлĕ ĕҫсем туманнине уйрăмăнах палăрă тунă.

Вышинский депутат сăмахне Сойуз Совечĕ пысăк тимлĕхпе итлет.

— Капиталисăмăн чи малта пыракан тата демократилĕ ҫĕршывĕсенче те,—тет Вышинский йулташ,—суд експлоататăрсемшĕн пуҫ пулса тăмали шанчăклă хĕҫ-пăшал пулса тăраҭ. Фашисла йуҫтици саккун вырăнне саккунсăрлăх, судйа вырăнне—палач тăратрĕ. Совет ҫĕршывĕнче кăна суд ĕҫҫыннисен интересĕсен хуралĕнче тăраҭ.

— Совет государстви совет судĕнчен социалисăмăн пĕтĕм тăшманĕсене хирĕҫ пĕр шелленмесĕр тата пĕрмайах кĕрешсе пыма ыйтаҭ. Сылтăмла-троцкисла тата ытти тĕрлĕ сутăнчăксен йăвисене вĕҫне ҫитиех аркатса ҫĕмĕрсе, совет сучĕ хăйĕн тăван ҫĕршыв умĕнчи, пĕтĕм ҫĕршыври ĕҫҫыннисен умĕнчи, пĕтĕм тĕнчери ĕҫҫыннисен умĕнчи, пĕтĕм куђтуралă етемлĕх умĕнчи таса тивĕҫлĕхне пурнăҫа кĕртсе пыраҭ.

Вышинский йулташăн ҫак сăмахĕсене депутатсем хĕрўллĕн аллă ҫупса кĕтсе илеҫҫĕ:

Йулашкинчен сăмах илсе, ССРС Йуҫтици Халăх Комиссарĕ Рычков йулташ тухса калаҫаҭ.

— Пренисем,—тет вăл,—ҫакна кăтартса пачĕҫ: ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă судоустройствă саккунĕн пройектне ССРС Верховнăй Совечĕн пур депутачĕсем те пĕр кăмăллă пулса ырлаҫҫĕ, уншăн тăраҫҫĕ.

Рычков йулташ ҫапла калаҭ: Сойуз Совечĕн Саккунсем хатĕрлекен Комиҫҫийĕ тата пренисенче калаҫнă депутатсем тўрлетўсем кĕртме сĕннисенчен нумайĕшĕпе килĕшетĕп,—тет.

Депутатсем тухса калаҫнисем тата вĕсен критикăллă асăрхаттарăвĕсем ССРС Йуҫтици Халăх Комиссариачĕн ĕҫне, сойузлă тата автономлă республикăсен Йуҫтици Халăх Комиссариачĕсен ĕҫĕсене ҫĕнĕле улăштарса лайăхлатас ĕҫре калама ҫук пысăк пулăшу парĕҫ,—тет докладчик.

„Саккунсем хатĕрлекен Комиҫҫийĕн ячĕпе йулашки сăмах илсе, Шагимардавăв депутат тухса калаҭ.

„ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройствă саккунне" Сойуз Совечĕ,—малтан разделсем тăрăх, унтан пĕтĕмĕшпех,—пĕр саслăн йышăнаҭ.

членĕсем, Халăх Комиссарĕсем пулнă.

Пренисенче Бакалдин, Кулов, Мусинкий, Хачикйан, Алекйан, Биркадзе депутатсем тата Мускав облăҫ сучĕн председателĕ Буканăв йулташ тухса калаҫнă. Тухса калакансем судоустройствă саккунĕн пройектне пĕр кăмăллăн ырлавă тата йуҫтици оргăнĕсен чылай практикăллă задачисем ҫинче чарăнса тăнă. Суд кадрĕсем хатĕрлес ыйту ҫине, судри ĕҫсене пăхса тухассине вăраха йамине хирĕҫ кĕрешес ĕҫе вăйлатас ыйту ҫине тата судоустройствăн ҫĕнĕ саккунĕ тăрăх халăх судйисем суйлама хатĕрленес ыйту ҫине уйрăмах тимлĕн пăхнă.

Йулашки сăмах илсе тухса калаҫнă ССРС Йуҫтици Халăх Комиссарĕ Рычков йулташ ҫакна палăрă тăваҭ: ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тăратнă судоустройствă саккунĕн пройектне Верховнăй Совет депутачĕсем пĕр кăмăллăн ырлаҫҫĕ, уншăн тăраҫҫĕ.

Национађнăҫсен Совечĕн ларăвĕсенче пройекта тўрлетўсемпе хушусем кĕртнĕ, вĕсем пройектăн уйрăм положенийĕсене тĕплĕнрех каласа хăвармала тăваҫҫĕ тата унăн редакцине лайăхлатаҫҫĕ. Рычков йулташ ҫапла калаҭ: ҫав тўрлетўсемпе хушусенчен нумайĕшĕпе епĕ йăлтах килĕшетĕп тата вĕсене йышăнмала тесе шутлатăп,—тет.

Йулашкинчен Рычков йулташ ҫапла калаҭ: Йуҫтици Халăх Комиссариачĕн ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене критикăлакансем йăлтах тĕрĕс тесе йышăнатăп, тет, тата депутатсем тухса калаҫнисенче асăрхаттарнă чылай ҫитменлĕхсене пĕтĕрес тĕлĕшпе тунă тата малашне тумалли ĕҫсем ҫинчен пĕлтерет.

Унтан йулашки сăмах илсе, Национађнăҫсен Совечĕн Саккунсем хатĕрлекен Комиҫҫи председателĕ Туркин депутат тухса калаҭ.

„ССР Сойузĕн, сойузлă тата автономлă республикăсен судоустройствă саккунне" Национађнăҫсен Совечĕ,—малтан разделсем тăрăх, унтан пĕтĕмĕшпех,—пĕр саслăн ҫирĕплетет.

Национађнăҫсен Советĕнче

Августăн 16-мĕшĕнче каҫхине Национађнăҫсен Совечĕн улттăмĕш ларăвĕ пулнă, унта судоустройствă саккунне сўтсе-йавас ĕҫ малалла пынă.

Ложăсем ҫинче партипе правителствă руководителĕсем, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн

(ТАСС).

Н. Денисовпа Н. Ватолина йулташсен плакачĕ.

Йут ҫĕршыв ĕҫĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Августăн 15-мĕшĕнче Йут ҫĕршыв ĕҫĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. П. Потемкин йулташ Пођшă посолне г. Гржибовскине йышăннă. Вăл хăйĕн правителстви хушнипе, ССР Сойузĕн Пођшăри полпредстви тата консуђствăн йĕркелĕ ĕҫне пăснă инцидентсене пĕтерес сĕнўсемпе пынă. Вăл инцидентсене хирĕҫ Пођшăн ССР Сойузĕнчи посођствипе консуђстви йеҫĕпе совет влаҫĕсем ответлă ĕҫсем туса ирттернĕ пулнă.

(ТАСС).

Линдберг Мускава вĕҫсе килет

Августăн 17-мĕшĕнче кăнтăрла Американăри паллă ђотчик Чарђз Линдберг, курса ҫўрес шутпа, Мускава вĕҫсе килет. Йулашки ҫулсенче Линдберг Англире пурăнаҭ. Вăл Лондонран арăмĕпе пĕрле вĕҫсе килет.

Линдберг августăн 18-мĕшĕнче Тушинăра авиаци праҫникĕнче пулма шутлаҭ, унтан вăл Мускавпа паллашаҭ.

(ТАСС).

Мускавра государствăн историлĕ публичнăй библиотеки уҫалаҭ

Мускавра государствăн историлĕ публичнăй библиотеки уҫăлаҭ. Унăн мĕлйун ытла тома ҫитекен тĕп фондне Истори музейĕн библиотекинчи тата ытти библиотекăсенчи кĕнекесем кĕреҫҫĕ. Ҫĕнĕ публичнăй библиотекă историксен, истори факуђтетĕнчи т. ыт. студентсен ăслăлăх ĕҫĕ валђи базă пулса тăмалла. Темиҫе пин вулакансем кунта питĕ нумай материалсем, документсем, истори атласĕсемпе карттисем тăрăх мĕн пур ҫĕршывсенчи халăхсен историйĕпе паллашма пултараҫҫĕ. Ҫĕнĕ библиотекăра вĕренў пособисем тата популарла-истори литературине тĕрĕс тĕлĕшпе ăслăлăхлă пысăк ĕҫсем тума палăртнă.

Государствăн историлĕ публичнăй библиотеки валђи Старосадски переулăкĕнче 9-мĕш №-лĕ ҫурт уйăрса панă. Вăл ҫуртăн пĕтĕм талкăшĕ—6.500 тваткăл метр.

Государствăн историлĕ публичнăй библиотеки—историлĕ материалсемпе документсен Пĕтĕм Сойузри пуйанлăхĕ пулса тăрĕ. Хăйĕн фончĕпе вăл государствă тата общественнăй организацисене, шкулсене тата пĕтĕм Сойузри библиотекăсене пулăшса тăмалла.

(ТАСС).

Сывӑ пултӑр совет ҫӗршывӗн мухтавлӑ та хӑватлӑ авиацийӗ!

Парашӳт уҫӑлать

Ирхине 6 сехет ҫитнӗ. Йулташпа вырӑна тухса утрӑмӑр. Илемлӗ ҫутҫанталӑкӑн пуянлӑхӗсемпе савнса пыратпӑр. Чере уҫӑ сывлӑшпа ирӗккӗн сывлать. Тӳлек ҫантӑлӑк, ҫемҫе ӑшӑ ҫил ҫанҫурама ачашлать. Тырӑ хушшинче путенесем йурра шарантаҫҫе. Йулташпа вылянкаласа пыратпӑр.

Вырӑна ҫитрӗмӗр. Инженерсем, техниксем, лӗтчиксем, мотористсем килсе ҫитнӗ. Пурте хӑйсен вырӑнӗнче. Пире хирӗҫ звено командирӗ тухрӗ. Аласене кар ус кӑсӑрукӗ ҫумне тытса командир йулташпа сывпулашрӑмӑр.

— Сирӗншӗн паян пысӑк савӑнӑҫ пулать. Сывлӑшра савӑнӑҫ йурри йурлама улӑхатпӑр,—терӗ командир.

Вӑхӑта пӗр минут та ахаль сая йамала мар. Самолет моторне тӗрӗслемеле. Бензин тултармала. Хамӑрпа пӗрле сывлӑша виҫӗ парашӳт илсе улӑхмала.

Пурте хатӗр. Самолӗтӑн пропеллерӗ сывлӑшра ҫӗрсе шӑвлама тытӑнчӗ. Командир епӗр сывлӑша улӑхма хатӗрленнисе ҫитнине тӗрӗслерӗ. Командирпа иксӗмӗр парашӳта хамӑр ҫума йӑлмакласа лартрӑмӑр. Кабинкӑсене вырнаҫрӑмӑр. Самолӗтӑн пропеллерӗ хытӑнрах шӑвлама пуҫларӗ. Стартер ҫул уҫса пачӗ. Самолет ҫӗр ҫуммипе хӑвӑрттӑн чупса пынӑ хыҫҫӑн сывлӑша ҫӗкленчӗ, ҫӳлелле ҫул тытрӑмӑр. Пелӗтсем хушшипе вӗҫсе пыратпӑр. Ака йӑлсем те, вӑрмансем те куранми пулчӗҫ. Лӗтчик вилӗм петлисем туса илчӗ. Моторсем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

— Миҫе метр улӑхнӑ епӗр, йулташ Казаков, циферблат ҫине пахӑр-ха,—терӗ командир.

Миҫе метр улӑхнине тӗрӗслерӗмӗр. Пурӗ 5.448 метр ҫӳлӗш улӑхнӑ. Кун ҫинчен командира пӗлтертӗм.

Командир самолӗта айаларах антарма тӑтӑнчӗ. Ҫӗртен 800 метр ҫӳлӗш йулсан самолӗта тӳрӗ тыгса пыма тытӑнчӗ. Пырсан-пырсан командир ман ҫине пӑхрӗ те аллине ҫӗклерӗ, сикме хатӗрленме хушрӗ. Малтанхи хут сикетӗп-ха. Чунӑм шиклӗннӗ пек туйӑнать. Анчах нимӗн те хӑраса тӑмастӑп, ку еҫе вӗреннӗ, аиаҫлӑн сикессе шанатӑп. Кабинкӑран тухса, ҫерелле пуҫ хӗрле вырӑна патӑм. Парашӳта уҫса йатӑм. Пурҫӑнтан тӗртсе тунӑ шап-шур ҫавракка мана шывлӑшра ҫӗклесе ҫӳрет, ҫӗр ҫинелле илсе антарать. Питех те савӑннипе савӑнӑҫ йурри йурласа йатӑм. Йурласа пынӑ манан ҫӗр ҫине анса тӑтӑм. Йулташсем хупарлӑса илчӗҫ. Парашӳтпа анӑҫла сикнешӗн тав турӗҫ.

О. Н. Казаков.

Лӗтчик пулатӑп

Епӗ йуратакан ӗҫ вӑл—самолӗтпа вӗҫесси пулчӗ. Авиаци ӗҫне чӗререн йурататӑп. Халӗ епӗ Шупашкарти аероклубра авиаци техникӗсен уйрӑмӗнче вӗренетӗп. Авиаци кунне вӗренӳре лайӑх паллӑсемпе кӗтсе илтӗм. Малашне татах лайӑх вӗренме пулатӑп.

Учлӗт Мефодий Моисҫейӗв.

ӲКЕРЧӖК ҫинче: Шупашкарти аероклубри Павкин звенинчи политзанятийӗ. Занятине Бетрединӑв политрук ирттерет.

Цыганов фото ӳкерчӗкӗ.

Малтанхи вӗҫев

Епӗ ҫамрӑклах, тӳпере самолӗт кӗрлесе килнине илтсен, темле ӗҫ пулсан та, курма чупса тухаттӑм. Кӳҫран ҫухаличченех ун хыҫҫӑн тинкерсе пӑхса ... ӑсатса йараттӑм. Манӑн ун ҫине ларса, сывлӑшра сӑпкари пек йӑрӑнас килетчӗ. Кунӗн-ҫӗрӗн самолӗт ҫине ларас пирки шухӑшлаттӑм.

Йалти шкула пӗтернӗ хыҫҫӑн кӗҫӗн вӑтам шкула вӗренме кӗтӗм. Ӑна пӗтерсен вӗҫевҫӗсен шкулне кайас тесе шухӑшларӑмӑр хамӑн тантӑш хӗрпе. Вӑл карӗ, манан каймала пулмарӗ, чирлерӗм. Вара, 1934 ҫулта кӗҫӗн вӑтам шкула пӗтерсен, Шупашкара килсе музыкӑпа-театр техникумне вӗренме кӗтӗм.

Кунта вӗренме кӗтӗм пулсан та, ҫапах манӑн самолӗт ҫинче вӗҫесси пуҫран тухмарӗ.

1937 ҫулта Шупашкарти аероклуб ҫумӗнчи планӗр шкулне вӗренме кӗтӗм, ҫав ҫулхинех вӗренсе пӗтертӗм. Планӗрпа вӗҫме вӗрентӗм.

Планӗр шкулне лайӑх вӗренсе пӗтернине кура мана чӑвашсен аероклуб ҫумӗнчи вӗҫев шкулне, врачсем сывлӑх йенчен тӗрӗсленӗ хыҫҫӑн, вӗренме илчӗҫ. Епӗ унта вӗренме тивӗҫлӗ пулнишӗн ҫав тери савӑнтӑм. Кӑнтӑрла театр училищинче вӗренетӗп, каҫхине вӗҫев шкулне кайатӑп.

Кӑҫалхи майӑн 23-мӗшӗнче штаб начальникӗ пире ыран вӗҫме пуҫласине пӗлтерчӗ.

Кун хыҫҫӑн учлӗтсем пурте савӑннипе чӑтаймасӑр сиккелесе илчӗҫ. Мӗн чӳл кӗтнӗ епӗр самолӗт ҫине ларса вӗҫессине!

Майӑн 24-мӗшӗнче ирхине 6 сехете, вырӑнта пулмаллаччӗ. Епӗ ҫав шухӑшпа сывӑрнӑскер, хӗпӗртенипе, кӑмӑл тулса ҫитнипе, ирхине 3 сехетрех ӑшӑ ыйӑхран вӑрантӑм. Тепӗр хут выртса сывӑрас, ыйӑх килмест. Пуҫра питӗ пысӑк шухӑш: мӗнле самолӗт ҫине ларасси. Вӑхӑчӗ час иртмест. Кӗтекеншӗн минут та сехетӗн туйӑнна теҫҫӗ. Маншӑн та ҫавӑн пекех. Вӑхӑт ҫитмен пулсан та вырӑна тухса утрӑм. Кунта ачасем сахал, ҫукпа пӗрех. Вӗсем часах пухӑнса ҫитрӗҫ. Ак вӗҫевҫӗ начальникӗ те ҫитрӗ. Старт уйӑртӑмӑр. Самолӗтсене ангарӑран кӑлара пуҫларӗҫ. Манӑн чӗре вырӑнта мар: пӗр май самолӗт патне кайас килет.

Самолӗтсем вӗҫе пуҫларӗҫ, пропеллерӗ кӗрлет ҫеҫ, чӗре сикет: Епӗ стартӗр. Самолӗтсене черетпе сывлӑша йӗркелӗн кӑларса йаратӑп. Ака самолӗтсем вӗҫе пуҫларӗҫ.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, мана:—Гайкова, санӑн вӗҫмелле, ҫакӑн хыҫҫӑн, терӗҫ.

Епӗр вӗҫмели самолӗт ҫӗр ҫине анса ларчӗ. Епӗ хӑвартрах инструктӑртан ирӗк илтӗм те, кабинӑна кӗрсе лартӑм. Ҫыхӑнтӑм, калаҫмали аппарата хӑлха ҫумне ҫыпӑҫтартӑм, очкине куҫ ҫине антартӑм.

— Хатӗр?,—тесе ыйтрӗ инструктӑр.

— Хатӗр! — терӗм епӗ ӑна хирӗҫ.

Самолӗт вырӑнтан тапранса тӳпенелле улӑхрӗ. Айала пӑхатӑп та: мӗн-мӗн куранмасть пулӗ? Пӗтӗм ҫӗр чӑмӑрӗ куранӑн туйӑнать. Ҫуртсем спичкӑ коропкисем пек пӗчӗккӗ, самолӗт айӗн иртсе йулаҫҫӗ. Мана инструктӑр ыйту ҫине ыйту парать: Ӑҫта епӗр анмалли вырӑн? Ӑҫта хула?... Ӑҫта Атӑл?... Ӑҫта кайатпӑр? Кӗтӳ куранать и?... Ӑҫта чукунҫул?..

Епӗ вӑл ыйтусем ҫине тӗрӗссӗн ответсем паратӑп. Самолӗт ҫинче ҫав тери хӗпӗртесе ларса пыратӑп. Кун пек нихӑҫан та хӗпӗртемен, хама-хам питӗ ҫирӗппӗн тытатӑп.

13 минут вӗҫнӗ хыҫҫӑн ҫӗр ҫумне сывхарса пытӑмӑр. Манӑн тата ытларах вӗҫес килетчӗ. Анчах инструктӑр самолӗта ҫӗр ҫине йерипен антарса лартрӗ.

Шухӑшлатӑп та: сывӑрмасӑр тӗлӗк курнӑн туйӑнать, ӗненессӗм килмест епӗ сывлӑшра пулнине... Ҫапла епӗ пӗрремӗш хут сывлӑшра ларса ҫӳрерӗм. Мӗнле савӑнӑҫ! Хам ӗмӗтленнӗ ӗмӗте кӗтсе илтӗм!

А. Ф. Гайкова.

Епӗр ҫунатлӑ ҫынсене ӗмӗрӗнчисем

Менжинский йачӗпе тӑракан савӑтри рабочисем ҫӗршыва вальли 150 пин лӗтчик вӗрентсе хатерлеме чӗнсе калаӑнине пирӗн ҫӗршыври ҫамрӑк патриотсем хавасланлӑн кӗтсе илчӗҫ. Малта пыракан ҫамраксем, уйрӑманах комсомолецсем, производствӑран уйӑралмасӑр самолӗтпа вӗҫме вӗр неҫҫӗ.

Ленинла-Сталинла комсомол пӑхса ӳстерне ҫамрӑксем Чӑвашсен аероклубӗнчи вӗренӳре пахӑ тӗслӗхсем кӑтартаҫҫӗ, ҫирӗп дисциплинӑшӑн кӗрешеҫҫӗ. Сӑмахран КОГИЗ-ра бухгалтӗрта ӗҫлекен Наумав, Чӑвашсойузра кадрсен группин руководителӗнче ӗҫлекен Йакавлев, комсомол Чӑваш Обкомӗнче ӗҫлекен Тимофейӗва, „Красный мебельщик“ ертелри рабочи Коротков йултӑшсенех илсе пӑхар. Вӗсем пурте теорипе те, практикӑпа та „отлично“ тата „хорошо“ паллӑсемпе вӗренсе пыраҫҫӗ.

Аероклубра лайӑх вӗренекенсем производствӑра та стахановла ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Сӑмахран, А. Коротков йултӑшах илер. Вӑл производствӑра кулленхи ӗҫ нормине 200 процент йе ытларах тултарса пырать. Йапони ирсӗр самурайӗсем тапаннине хирӗҫ ответлесе вӑл аероклубра отличникран кайа мар вӗренсе пыма тата производствӑри ӗҫ нормине 200 процентран кайа мар тултарса пыма обйазательстви илчӗ.

Ленинла Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнине уйавлама хатӗрленетпӗр. Учлӗтсем тӑван ҫӗршыв-аннемӗре пысӑк парне пама пулса, теорипе те, практикӑпа та кӑтартулӑн вӗренсе пыма пулчӗҫ. Ҫак обйазательствӑсене пурнӑҫласшӑн социалисӑмла ӑмӑрту сарӑлса пырать. Учлӗтсем пурте пӗрпӗрнипе ӑмӑртса вӗренеҫҫӗ. Чӑвашсен аероклубӗ Мордва аероклубӗпе социалисӑмла ӑмӑртӑва тухнӑ. Ӑмӑртура мала тухассишӗн вӑйлӑ кӗрешӳ пырать.

Политрук помощникӗ А. Миронӑв.

Вӗҫев искусствине вӗренер

Совет союзӗнче авиаци кунне 1933 ҫулта уйавлама пуҫланӑ. Унтанпа пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисем кашни ҫулах авиаци кунне уйавласа ирттереҫҫӗ, сывлӑш флочӗн ҫӗнтерӗвӗсемпе ӳсӗмӗсене пӑхса тухаҫҫӗ.

Осоавиахим авиацийӗ—халӑх тивлече. Телейлӗ ҫӗршывӑн оборонине тӗреклетес тӗллӗшпе пӗрремӗшпе иккӗмӗш пилӗкҫуллӑхсенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлесе пынипе турӑмӑр ҫак авиацине. Совет патриочӗсем ҫӗршыв оборонине тӗреклетессишӗн хӗрӳлӗн ӗҫлесе пыраҫҫӗ. Партипе правительства тата йуратнӑ ҫулпуҫ Сталин йулташ пирӗн авиацине вӑйлатассишӗн ӗҫлесе пыраҫҫӗ, пултарулӑ лӗтчиксем пӑхса ӳстереҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршыври кашни гражданинах лӗтчик тата ҫӗршывӑн геройӗ пулма пултарать. Громав, Чкалав, Водопйанӑв, Коккинаки, Бельӑков, Байдуков, Йумашӗв, Данилин, Брйандинский, Осипенко. Ломако, Раскова, Гризодубова тата ытти геройсен йачӗсене лайӑх пӗлсе тӑрать совет халӑхӗ. Пирӗн геройсем пиншерӗн шутланаҫҫӗ. Вӗсем совет машини совет лӗтчикӗ тытса пынипе тӗнчӗмӗле вӗҫевсем тума пултарнине пӗтӗм тӗнчене кӑтартса пачӗҫ.

Пире, лӗтчиксене, аслӑ Сталин йуратать. Сталин йулташ йачӗпе пирӗн лӗтчиксем ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ рекордсем тӑваҫҫӗ.

Телейлӗ ҫӗршыври кашни ҫамрӑк, кашни ҫамрӑк хӗр аероклуба вӗренме кӗме тӑрӑшать. Вӗсем вӗҫев техникине ҫӗнсе илесшӗн.

Пайан чӑваш халӑхӗ ССР Союзӗнчи пӗтӗм халӑхпа пӗрле авиаци праҫникне савӑнӑҫлӑн уйавлать. Республикре авиаци ӗҫне вӗренесси 1934 ҫул пуҫламӗшӗнче тытӑннӑ. Ҫак вӑхӑтранпа ӗҫре чылай ӳсӗмсем пуррине куратпӑр. Аероклуб икӗ хутчен учлӗтсем вӗрентсе кӑларса ҫӗршыва чылай пилотсемпе парашӳтиссем хатӗрлесе пачӗ. Икӗ ҫул хушшинче аероклуб пултарулӑ инструктӑр-лӗтчиксем ӳстерчӗ. Чӑваш хӗрӗ Нурӑ Ҫмирнова (республӗкри пӗрремӗш пилот), Матвейӗв, Бронникӑв, Арҫентиев, Усӑв тата ыттисем те ҫак шкултан вӗренсе тухнӑ, халӗ вӗсем хӑйсем ҫамрӑк пилотсем вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ. Аероклубӑн пултарулӑ инструктӑр-лӗтчиксем пур. Вӗҫев пайӗн начальникӗ Линьков, звено командирӗсем Дунин, Лунӗв; инструктӑрсем: Павкин, Широкӑв, Алексейенко; техниксем: Кулешов, Чуркин тата ытти йулташсем те авиаци кадрне вӗрентсе хатӗрлес ӗҫре стахановла меслетсемпе ӗҫлесе пыраҫҫӗ.

Чӑвашсен Тӗп аероклубӗ авиаци кунне пысӑк ҫитенӳсем тунипе кӗтсе илче. Иртнӗ ҫулта вӗреннӗ учлӗтсенчен авиаци кунӗ тӗлне хайсене тӗллӗн 6 сын ҫеҫ вӗҫме пултарнӑ. Халӗ вӗренекен учлӗтсем пурте хӑйсене тӗллӗн вӗҫеҫҫӗ, ҫак вӑхӑта илсен вӗҫме вӗренмели 8-мӗш задачӑ тӑрах вӗҫесси пырать.

Скворцовӑ, Наумӑв, Тимофейӗва, Миронӑв, Зиньков, Кузнецов учлӗтсем „отлично“ паллӑсемпе вӗренсе пыраҫҫӗ.

Учлӗтсем хӑйулӑхӗ хӑнӑхаҫҫӗ. Пӗр кунхине учлӗт Шихранӑв йулташ хай тӗллӗн вӗҫме улӑхса кайнӑ. Мотор лайӑх ӗҫлеми пулнӑ, кун хыҫҫӑн вӑл зажиганине хупса лартнӑ. Самолӗта ҫӗр ҫине чиперех антарса лартнӑ.

Анчах та пирӗн авиаци ӗҫӗнче ҫитменлӗхсем те нумай. Планӗрпа парашӳт ӗҫне республикре пуҫласа йамаппа пӗрех. Парашӳт вышкисем те ҫук. Пирӗн ҫак ҫитменлехсене пӗтерсе, авиаци ӗҫне пӗтӗмпех кӑтартулӑн туса пыма тытӑнмала.

Халӑх тӑшманӗсем, шпионсемпе диверсантсем Осоавиахим ретне хӗсӗнсе кӗрсе сӑтарла ӗҫ туса пынӑ. Пирӗн хӑватлӑ чекиссем, сталинла Нарком Йежов йулташ йертсе пынипе, Осоавиахим ретӗнче пулнӑ халӑх тӑшманӗсене, шпионсемпе диверсантсене ҫапса салатрӗҫ. Тӑшмансене таптаса лапчатнӑ. Апла пулин те пирӗн Совет Сойузне капиталисӑмла йӗри-тавралӑхра пурӑннине, капиталисӑмлӑ патшалӑхсем пирӗн патӑ шпионсем, диверсантсем, вредителсем йарса тӑрасса манма йурамасть. Большевикла сисӗмлӗх нихӑҫанхинчен те вӑйлӑ пулмалла. Германи, Итали, Йапони фашисӗсем Совет Союзне хирӗҫ вӑрҫӑпа тухма хатӗрленеҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн Хӗрлӗ ҫара, Хӗрлӗ флота, Хӗрлӗ авиацине, Осоавиахима ҫирӗплетсе пымала.

Епӗр орденлӑ Чӑваш республикинчи ҫамрӑксене аероклуба кӗрсе, паха та мухтавлӑ вӗҫев искусствине вӗренме чӗнетпӗр.

А. АНДРИЙАНӐВ

Аероклуб штабӗн начальникӗ.

М. Ҫеменӑв

Аеродромра

Вӑрман урлӑ сут хӗвелӗ
Тухрӗ тӑрӑ тӳпене.
Чун хаваслӑ, кун илемлӗ—
Чӑн-чӑн ӑшӑ ҫуркунне.

Йероплане, парашӳчӗ,
Дирижабел те, планер
Хупӑрлареҫ ҫӑмӑр пӗлчӗн
Йанкӑр уҫӑ тӳпене.

Пӗр таттисӗр кӗр-кӗрлерӗҫ
Харсӑр хурҫӑ кайӑксем.
Кун каҫах ҫӳлте тӗрленчӗҫ
Сталин йачӗлӗ тӗрсем.

Ӗмӗр-ӗмӗрех ҫуталтӑр
Сталин ҫӑлтӑрӗ умра.
Ун ҫуттипеле ҫуталчӗ
Паттӑр ушкӑн сывлӑшра.

Мускав облаҫӗ.

Социалисӑм ҫӗршывӗн сывлӑш флочӗ

Кӑҫалхи авиаци кунӗ—пӗтӗм халӑхӑн 6-мӗш авиаци праҫникӗ—историлӗ пысӑк ҫӗнтерӳсем тунӑ вӑхӑтра пулса иртет, вӑл ҫӗнтерӳсене аслӑ совет халӑхӗ йулашки ҫулсенче социалисӑм строительствин пур фрончӗсенче те тунӑ. Нихӑҫанхи пек мар хӑватлӑ та вӑйлӑ пирӗн социалисӑмлӑ тӑван ҫӗршыв. Сталинла икӗ пилӗкҫуллӑхсем хушшинче Совет Союзӗ хӑватлӑ авиацилӗ державӑ пулса тӑчӗ. Пирӗн авиаци промышленноҫӗ ҫултан ҫулах тӗреклӗнет тата ӳсет. Пирӗн авиаци савачӗсем пӗрремӗш класлӑ самолӗтсем туса кӑлараҫҫӗ, вӑл самолӗтсене пӗтӗмӗшпех совет материалӗсенчен тунӑ. Вӗсем вӑрӑм ҫулсем хушши, пысӑк хӑвӑртлӑхпа, нумай тийесе тата нумай ҫӳлте вӗҫеҫҫӗ.

Пилӗк ҫул каййарах халӑхсен аслӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ ҫапла каларӗ:

— Пирӗн авиаци промышленноҫӗ пулман. Вӑл пур халӗ пирӗн.

Революцичченхи Российӑн хӑйӗн авиаци промышленноҫӗ, хӑйӗн сывлӑш флочӗ пулман. Патша Российӗнчен епӗр темиҫе ҫӗр кивелсе кайнӑ самолӗтсем илтӗмӗр, часах вӗсем музейсенче кӑна курӑнкалама пуҫларӗҫ. Вӑл самолӗтсене пирӗн лӗтчиксем „вӗҫекен тупӑксем“ тесе чӗнетчӗҫ. Пулеметсем тата бомбӑсем пӑрахмалли хатӗрсем вӗсен питех те начар пулнӑ. Вӑл машинӑсем ҫинче вӗҫекен лӗтчиксем бомбӑсене самолӗт кабининчен тӳрех аллӑрса пӑрахса пынӑ, авиацилӗ пулеметсем вырӑнне вӗсем хӑйсемпе пӗрле револьверсем тата винтовкӑсем илсе ҫӳренӗ.

Уйрӑмӑнах вӑл вӑхӑтра ҫунтармалисен ытӑвӗ ҫивӗччӗн тӑнӑ. Кутӗлӗшпе граждан вӑрҫи фрончӗсенчен пӗринче пулса иртнӗ ҫак ӗҫ питех те кӑтартулӑ пулса тӑрать. Шуррисен тылне ответлӑ вӗҫев тума ҫунтармали кирлӗ пулнӑ. Ӑна пульницӑсенче, сехетсен магазинӗсенче тата хваттерсенче пухмалла пулнӑ. Мотора мӗн ҫунмалла пултарнине пурне те пухнӑ. Темиҫе лавсем ҫинче самолӗт патне нумай бутылкӑсем, флаконсем, бидонсем, фляӑсем тийесе пынӑ, вӗсенче бензин, скипидар, спирт ефир тата ыт. те пулнӑ. Вырӑна ҫитсен вӗсене хутӑштарнӑ та, ҫав ҫунтармалипе вӗҫеве пурнӑҫа кӗртнӗ.

Лайӑх аеродромсем ҫинчен ун чухне ӗмӗтленме те май пулман. Мӗн пур ҫӗрте—улӑхра, хирте—пур ҫӗрте те ларнӑ. Метеорологилӗ службӑ та ун чухне пулман, халӗ пирӗн нумай институтсем, станцисем ӗҫлеҫҫӗ. Радиоҫыхӑну та питех те начар ӗҫленӗ.

Пире патша Российӗнчен йулнӑ ҫӗмрӗк, йухӑнса кайнӑ машинӑсем ҫинче пирӗн сывлӑшри мухтавлӑ воинсем вырӑс генералӗсен тата интервентсен контрреволюцилӗ ҫарӗсемпе уҫҫӑн ҫапӑҫма тухнӑ, тӑшмансене вӑйлӑн ҫӗмтерсе пынӑ, ҫапӑҫура хаиччен пулман геройлӑх тата хӑйулӑх кӑтартнӑ. Пиншер паттӑр ӗҫсем ҫырса хунӑ пирӗн авиаци историн кӗнекине.

Хӗрлӗ лӗтчиксем хӑйсене шеллемесӗр хӑйсен тӑван ҫӗршывне сыхланӑ. Вӗсенчен нумайӗшӗ мухтавлисен вилӗмӗпе вилнӗ. Аслӑ совет халӑхӗ вӗсене халичченех ыра кӑмӑлпа асра тытать.

Пӗтӗм тӗнчери империалисӑмлӑ вӑрҫӑра тата граждан вӑрҫинче авиаципе усӑ курни сывлӑш флочӗ пысӑк задачӑсем татса пама пултаракан вӑй пулса тӑнине кӑтартса пачӗ.

Граждан вӑрҫи пӗтнӗ хыҫҫӑнах, пирӗн парти тата совет правительстви социалисӑм государствин оборонин хӑватлӑ хӗҫпӑшалӗ пулса тӑракан сывлӑш флотне тӑвас ӗҫ ҫине уйрӑмӑнах пысӑккӑн ҫавӑрӑнса пӑхрӗҫ.

1924 ҫулта совет авиаци промышленноҫӗ пӗрремӗш совет самолӗчӗсене кӑларасине йӗркелесе яма тытӑнчӗ. 1927 ҫулта вӑл ӗнтӗ нумай моторлӑ сывлӑш-ҫар караппӗсене кӑларса тӑма пуҫларӗ. Ҫак вӑхӑтах моторсем туса кӑларассине те йӗркелесе йанӑ.

Пӗрремӗш пилӗкҫуллӑх хушшинче совет халӑхӗ, Ленин—Сталин аслӑ партийӗ йертсе пынипе, хӑватлӑ авиаци промышленноҫӗ туса хучӗ, пуйан конструкци базине турӗ тата пысӑк наукӑпа тӗпчев институчӗсем организацилерӗ.

Иккӗмӗш пилӗкҫуллӑх пирӗн авиаци техникине ҫӳлӗ вырӑна ҫӗклеме май пачӗ, ун пек авиаци техникишӗн кирек хӑш капиталисӑмла ҫӗршыв та хапӑнма пулта рать. Совет авиаци промышленноҫӗ пирӗн хӑватлӑ Хӗрлӗ Ҫара хӑватлӑ бомбардировщиксем, хӑвӑрт вӗҫекен истребителсем тата штурмовиксем парса тӑрать тата малалла та парса тӑрӗ.

Пирӗн сывлӑш флочӗн хӑватне йулашки ҫулсенче пирӗн тӑван ҫӗршывӑн мухтавлӑ соколӗсем инҫе, ҫӳле тата хӑвӑрт вӗҫес тӗллӗшпе тунӑ рекордлӑ вӗҫевсем аван кӑтартса параҫҫӗ. 1934 ҫулта Совет Сойузӗн геройӗсем Громӑв, Спирин тата лӗтчик орденоносӗц Филин йулташсем тӳрӗ ҫулпа инҫета анса лармасӑр пӗр моторлӑ самолӗт ҫинче 12.411 километр вӗҫсе тухрӗҫ. Челюскинӗцсен еппопейи пирӗн лӗтчиксене пӗтӗм тӗнчипе мухтавлӑх кӳчӗ. Пирӗн авиаци ҫӳлӗ тата нумай тийесе вӗҫме пултарнине 1936 ҫулта лӗтчик-геройсем Коккинаки, Йумашӗв, Нухтикӑв тата Липкин йулташсен мухтавлӑ вӗҫевӗ аван кӑтартса парать. 1937 ҫул совет авиаци историнче питех те паллӑ ҫул, инҫета анса лармасӑр инҫе вӗҫессисен ҫулӗ пулнӑ. Сывлӑш техники ҫӳлӗ ҫӗр полюсне тата Мускаври Ҫурҫӗр полюсӗ урлӑ Америкӑна вӗҫевсем пӗтӗм тӗнчене тӗлӗнтерчӗҫ, вӑл вӗҫевсене Совет Сойузӗн геройӗсем Чкалӑв, Байдуков тата Бельӑков, Громӑв, Йумашӗв тата Данилин йулташсем туса ирттерчӗҫ. 1938 ҫул инҫета анса лармасӑр Мускаврӑн Владивосток районне хӑвӑрттӑн вӗҫсе тухнипе паллӑ пулчӗ. Совет Союзӗн геройӗсем Коккинакипе Брйандинский „Москва“ самолӗт ҫинче пӗр тӑлӑк хушшинче 7.600 километр вӗҫсе тухрӗҫ. Кӑҫал совет ҫӗршывӗн ҫар лӗтчицисем—Осипенко, Ломако тата Расковӑ йулташсем питӗ те паха вӗҫев турӗҫ. „МП—1“ гидросамолӗт ҫинче вӗсем пӗлӗтсем тата тӑвӑлсем, ҫӑмӑр пӗлӗчӗсем витӗр Хура тинӗсрен Шур тинӗс патне ҫити вӗҫсе тухрӗҫ, ҫапла майпа вӗсем инҫе вӗҫес тӗллӗшпе пӗтӗм тӗнчипе ҫӗнӗ рекорд турӗҫ.

Совет авиацийӗн ҫак пысӑк ҫитӗнӗвӗсем пурте—пирӗн ҫӗршывӑн хӑватне, пирӗн самолӗтсем пысӑк пахалӑхлӑ пулнине, совет ҫыннисем, аслӑ Сталин пӑхса ӳстернӗскерсем, хӑйулӑ та пултарулӑ пулнине кӑтартакан тӗслӗхсем пулса тӑраҫҫӗ.

Анчах йулашки ҫулсенче пирӗн герой-лӗтчиксем тунӑ ӳсӗмсем вӗсем вӗҫне ҫитнине пӗлтермеҫҫӗха. Малашне татах та пысӑкрах ӳсӗмсем тума майсем пур. Пирӗн авиаци, пирӗн лӗтчиксем малашне вӗсем хӑйсем мӗн тума пултарнине татах та ырлӗн кӑтартса паҫӗҫ.

Пӗтӗм халӑхӑн 6-мӗш авиаци праҫникне епӗр пӗтӗм тӗнчери питех те ҫивӗч лару тӑрура, вӗҫе хӗррисӗр пулса пыракан провокацисемпе Совет Сойузне хӑратма пӑхнисем лару тӑрӑвӗнче кӗтсе илетпӗр. Йапони военщини халиччен пулман ирсӗрлӗхпе пирӗн Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи чикӗсем патӗнче пӗр провокаци хыҫҫӑн теприне туса пырать. Йапони самурайӗсемшӗн Хасан кӳлли районӗнче совет территорийӗ ҫине кӗрсе кайса провокаци тума пӑхни питех те хакла ларчӗ. Пӗрремӗш класлӑ ҫар техникипе хӗҫпӑшалланнӑ пирӗн Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Хӗрлӗ йалавлӑ фронтӑн паттӑр чаҫӗсем Йапони захватчикӗсене аркатса тӑкрӗҫ, вӗсене совет территори ҫинчен шӑлса ывӑтрӗҫ. Пӗрремӗш (Приморский) ҫар штабӗ кӑҫалхи августӑн 8-мӗшӗнче пӗлтерниччен паллӑ ӗнтӗ: Йапони захватчикӗсене хирӗҫ мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗр ҫинчи чаҫӗсемпе таччӑн ҫыхӑну тытса, пирӗн мухтавлӑ лӗтчиксем хӑйсен умне лартнӑ ҫапӑҫулӑ задачӑна паттӑрӑн та хӑйулӑн пурнӑҫа кӗртрӗҫ, пирӗн тӑван ҫӗршывӑн таса ҫӗрӗ ҫине пырса кӗнӗ противника пӗтерсе лартрӗҫ.

Йапони военщини ирсӗр провокаци тунипе ҫав тери тарӑхса, пӗтӗм совет халӑхӗ пиншер митингсенче тата пухусенче кирек хӑш минутра та хӑйӗн аслӑ тӑван ҫӗршывне сыхласа тӑма тата пирӗн чикӗсем ҫине тапӑнма хӑйнӑ кирек хӑш тӑшмана та пӗтерсе хума хатӗррине пӗлтерчӗ.

Пирӗн авиаци оборонӑн хӑватлӑ средстви пулса тӑрать, мир факторӗ, культурӑпа прогресс аталанӑвӗн вӑйлӑ рычакӗ пулса тӑрать. Пирӗн авиаци хӑйӗн сунӑчӗсем ҫинче пӗтӗм етемлӗхшӗн мирӑла тата ирӗклӗх ҫӗклесе пырать.

Империалисӑмлӑ агрессӑрсен ҫӗршывӗсен авиацийӗ халӑхсемшӗн вилӗм, культурӑпа прогресшӑн пӑчлӑх ҫӗклесе пырать. Италипе Германин Испанири интервенцийӗ икӗ ҫулӗ хушшинче фашисла авиаци нумай хуласемпе йалсем ҫине тискер кийӑкла бомбӑсем пӑрахса ҫӗмӗрчӗ. Пиншер сыхлӑхсӑр ачасем, хӗрарӑмсем, старихсем тата сывмаррисем вилсе пӗтрӗҫ. Пӗр Барселонӑ ҫине Испанири вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Германипе Итали авиацийӗ 53 хут вӗҫсе пырса бомбӑсем пӑрахрӗ. Францири „Эвр“ хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, ҫак вӗҫекен сы-

„Кам сывлăшра вăйлăрах, вăл пирĕн вăхăтра пур йенчен те вăйлă“ (Ворошилăв)

Авиаци рекорчĕсен çулĕ

(1937 çулхи августăн 18-мĕшĕ—1938 çулхи августăн 18-мĕшĕ)

Августăн 24-мĕшĕнче парашӳт спорчĕн тава тивĕçлĕ маçтаре капитан орденоносĕц К. Кайтанăв 11.037 метр çӳлĕшĕнчен парашӳтпа сикнĕ. Самоԓота тыса пыраканĕ ԓотчик М. И. Скитăв пулнă.

* * *

Августăн 30-мĕшĕнче 3-мĕш рангри инженерсем Й. Г. Украинскипе В. Н. Алексейĕв субстратостатпа 15.200 метр çӳлĕшне хăпарнă. Субстратостат Иванов облăçĕнчи Неглово йалĕ патне лайăххăн анса ларнă.

* * *

Аеродинамикă институтĕнчи ԓотчик-испытатĕл Алексейĕв августăн 30-мĕшĕнче, фӳзеԓяж çине пĕр тоннă хăйăр тиесе 11 километр çӳлĕшне вĕçсе хăпарнă.

* * *

Çентябĕрĕн 15-мĕшĕнче лейтенант орденоносĕц Б. Романăвпа 3-мĕш рангри çар инженерĕ М. Шитăв субстратостатпа 14.750 метр çӳлĕшне хăпарнă.

* * *

Октябĕрĕн 2-мĕшĕнче, Тушинă сывăхĕнчи аеродром çинчен „УТ—1“ гидропланпа вĕçсе Стефановскипе Никитин пилотсем çĕнĕ рекорд тунă.

* * *

Октябĕрĕн 7-мĕшĕнче ԓотчик-испытатĕл А. Кржижевский „Гидро—1“ çăмăл спорт самоԓочĕпе вĕçсе çĕнĕ рекорд тунă, тĕнчĕри рекордран 130 километр ытларах вĕçнĕ.

* * *

Октябĕрĕн 9-мĕшĕнче совет ԓотчикĕ Валентина Гризодубовă „УТ—2“ тата „УТ—1“ самоԓотсемпе хăвăрт вĕçнипе тĕнчипе çĕнĕ рекорд тунă.

* * *

Октябĕрĕн 15-мĕшĕнче ԓотчик орденоносĕц Валентина Гризодубăвăпа техник Йекатеринă Славоженко „УТ—2“ гидросамоԓот çинче 3.300 метр çӳлĕшне вĕçсе хăпарнă.

* * *

Октябĕрĕн 21-мĕшĕнче ԓотчик-спортсмен Николай Федосейĕв пĕр вырăнлă „УТ—1“ спорт гидросамоԓочĕ çинче пĕр анса лармасăр 1.200 километр ытларах вĕçнĕ. Кун пек самоԓот çинче вĕçсе малтанхи рекорд Америкăри ԓотчик Бенйамин Кинг тунă пулнă,—вăл 353 километр та 988 метр вĕçнĕ.

* * *

Октябĕрĕн 29-мĕшĕнче капитан Жеребченко 720 лаша вăйлă моторлă гидросамоԓот çинче 11.869 метр çӳлĕшне вĕçсе хăпарса пĕтĕм Сойузĕпе çĕнĕ рекорд тунă.

Макаравă планерис икĕ вырăнлă „Ш—II“ планерпа сывлăшра 19 сехет те 08 минут хушши вĕçнĕ.

Майор Минов, Шилав пассажирпа, „Ш—II“ планер çинче 2.947 метр çӳлĕшне вĕçсе хăпарнă. Икĕ вĕçевне те пĕтĕм Сойузри рекорд тесе йышăннă.

* * *

Майăн 8-мĕшĕнче, Тушинăри аеродромра, бензин моторĕпе ĕçлекен Зурин конструкципе тунă самоԓот моделĕ 21 километр та 857 метр вĕçнĕ. Ку вĕçеве спорт комиссийĕ пĕтĕм Сойузри рекорд шутласа регистрациленĕ.

* * *

Майăн 15-мĕшĕнче совет планерисамĕн маçтарĕ В. Илченко „Стахановец“ планерпа пассажир лартса вĕçнĕ. Планер 552 километр та 100 метр хушши вĕçсе Воронеж облăçĕнчи Мучкан йалĕ патне ăнăçлăнах анса ларнă.

* * *

Ийунĕн 27-мĕшĕнче, 8 сехет те 36 минутра В. Коккинакипе А. Брвандинский Мускав—Владивосток маршрут тăрăх вĕçеве кайнă. Ийунĕн 28-мĕшĕнче, 9 сехет те 12 минутра Спасск хули çывăхне анса ларнă. 24 сехет те 36 минутра 7.600 километр ытла, йе сехетре 307 километрлă хăвăртлăхпа вĕçнĕ.

* * *

Ийулĕн 2-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 4 сехет те 36 минутра „МП—1“ гидросамоԓотпа аслă лейтенант П. Осипенко, аслă лейтенант В. Ломако тата штурман-лейтенант М. Раскова Севастопоԓ—Архангеԓск маршрут тăрăх пĕр анса лармасăр вĕçме тухнă. 19 сехет те 09 минутра ԓотчица П. Осипенко Холмова кули патне самоԓота лайăххăн антарса ларнă. 10 сехет те 33 минут хушшинче 2.416 километр, вăтамăн илсен—сехетре 228 километр хăвăртлăхпа вĕçнĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкар аероклубĕнчи учԓот Москвина йулташ.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Шупашкарти аероклубра

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): Инструктăр Широкăв, учԓотсем Тимофейĕвă тата Моторин йулташсем вĕçев умĕн.

Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Бор. Шашков
ԓотчик—лейтенант

ԓотчик çырăвĕсем

Çĕра кайиччен епĕ хаçатра ĕçленĕ. Хаçат ĕçĕ мана блокнотпа уса курма вĕрентрĕ. Çĕнĕ йеркепе—авиаципе тата унăн çынĕсемпе тĕлпулнă хыççăн, çырса пыма пуçларăм. Малтанхи çырăвăн салтавĕ—Васнецов каласа кăтартни пулчĕ. Васнецов—ватă ԓотчик тата „тӳрлеме“ пултарман йĕкĕт. Граждан вăрçи вăхăтĕнче вăл кавалеринче пулнă. Вăл хĕрĕх тăватă хутчен хĕçлĕ атакăра пулса та аманман.

Çар чăсне пырсанах, епĕ Васнецовпа туслашрăм. Йунашарах пурнатпăр епĕр, чей ĕçнĕ вăхăтра час часах иксĕмĕр калаçса иртеретпĕр.

Манăн икĕ моторлă бомбардировщикле пĕрремĕш хут вĕçеве тухмали çинчен пĕлне хыççăн, Васнецов мана çапла каларĕ:

— Санавла пулăр, йĕкĕт, йурăту çинчен сахалтарах шухăшлăр, ытларах пулас вĕçев çинчен шутлама тăрăшăр.

— Меншĕн кирлĕ кунта йурăту çинчен калаçни?—ыйтрăм епĕ.

— Есĕр ытла та çамрăк-ха, йĕкĕт. Итлĕр. Ку ĕç пĕр вунă çул каялла пулса иртрĕ. Епĕ икĕ моторлă развеччикпе вĕçеве тухрăм. Тупранса кайсанах мана ăнаçсăрлăх йĕрлеме пуçларĕ. Çĕр çийĕн чуптарнă чухне машина тĕрĕс мар илтĕм. Увăн çӳлеле хăпарма кирлĕ хăвăртлăхĕ пулман-ха. Уйчухне метр çӳлĕшĕнче урапасем çĕре пĕрĕнчĕç те, епĕ сывлăшра пултăм. Иконостас сив тытнă пек чĕтретет. Кунта çакна палăртса хăвармала: иконостас тесе ԓотчик приборĕсем ларакан хăмана калаţ. Вĕсем Васнецов машини çинче темиçе теçетке те пулнă.

— 80 метр çӳлĕшĕнче манăн сулахай мотор аманчĕ. Вăл сасартăках ĕçлеме те чаранчĕ, унăн патакĕ тунăранпа та çаврăнма тивĕçлĕх илмен пекех.

Васнецов вунта патак тесе калаţ кунта.

— Сылтăм мотор çеç ĕçленипе машина сулахай йенне чалăшса карĕ. Епĕ чăрмавсем уйкинче тăратăп, умра — городок. Хамăн умрах ларсан—тупăка кĕрсе выртни туйăнаţ. Çӳлĕхе сухатса епĕ 180 градуслă çаврăну турăм. Манăн халха патĕнчех радио мачти шăхарни илтĕнчĕ. Йăваçсен тăррисем машинан хырăмне чăрмаласа йулчĕç. Ку вăхăтра мана туратсем самоԓот витринĕ мар, хамăн ӳте чăрмаланăн туйăнчĕç. Епĕ аран-аран аеродром хӳми урлă каçрăм. Çавăнтах урапасем çĕре перĕнчĕç те, тепĕр хут сывлăша хăпарчĕ. Епĕ пĕлместĕп: вăл миçе минут çакăнса тăчĕ ши, мана вăл вăхăтра çывăрса илмелĕх те вăхăт пулнăн туйăнчĕ.

Çĕре ӳкнĕ хыççăн, самоԓот кусса карĕ. Вăл питех те нумай куснă пулчĕ. Телейе пула манăн çул çинче самоԓот йешчекĕ пулнă. Вăл тата самоԓот турпас пек саланса карĕç, анчах епĕ пĕр метр та малала каймарăм.

Кайран çакă паларчĕ: вĕçсе уласас умĕн бензин бакне уçас вырăнне хупса хунă. Ку манăн штурманан айăпĕпе пулнă. Епĕ ăна йурататăмччĕ. Вăл çав тери аван хĕрччĕ, вăл—Маруççă Илйина. Вĕçев умĕн çеç калаçса илнĕччĕ. Ку манăн хĕрĕх пиллĕкĕмĕш атакăчĕ, анчах ăнăçсăр пулчĕ...

Епĕ ԓотчик каланине çыртăм та, ăна Васнецова вулама патăм. Çырнине мĕнле жанăра кĕртме пĕлменни çинчен каларăм, вăл мана çапла ответ пачĕ:

— Салхулисĕр пуçне пур жанăрсем те аван.

* * *

Самоԓот хăй культурлă пулнине йураташ. ԓотчиксем: машина хăйне „есĕр“ тесе калаçмасан çынсене чысах айапласт, теççĕ. Епĕ ку тĕрĕссине хамăн ĕçрех курма пултартăм.

Манăн хăвăртлăхлă машинăпа пĕрремĕш вĕçев тунмала пулче. Епĕ—пĕр уйăх хушши унăн мелĕсене тĕпчесе вĕрентĕм. Вăл —тĕлĕнмелле самоԓот, пирĕн авиаци техникин йулашки çамахĕ.

Епĕ старт линийĕ çине тухса лартăм. Стартĕр флажокĕ çӳлелле вĕлкĕшрĕ—вĕçме ирĕк пачĕ. Епĕ газ патăм, самоԓот вырăнтан тапранаţ, кĕске вăхăтрах машинă урапасем кусма тытăнчĕç. Ака епĕ çĕртен уйăлтăм, çĕр ĕнтĕ айала тăрса йулаţ, аеродром карти, чукунçулĕ, йухăншыв, çыран хĕрринчи йăвăçсем вĕлтлетсе йулчĕç.

— Йĕкĕт,—тетĕп епĕ хама хам,—вĕçсе хăпарасси ăнăçлă пулчĕ. Малала та çавăн пекех ĕçле.

Анчах „çавăн пекех ĕçлеме“ май килмерĕ. Епĕ малтанхи çаврăнăвăн çӳлĕшне астăваймасăр йултăм. Ăна 200 метр çӳлĕшĕнче тăваççĕ, епĕ 500 метр çӳлĕшне ситнĕ тата аеродромран та ытла инçе кайнă. Епĕ хам пысăк хăвăртлăхлă совет машинĕ çинче ларнине манăнă.

—Ан сывăр, есĕ урапа çинче мар вĕт,—варçатăп епĕ хама, машинăна тепĕр уйкă тума çавăратăп.

Тăваттăмĕш çаврăм хыççăн чипер тытса пыма пуçлатăп.

—Есĕр, йĕкĕт, лармалли паллă патне çитейместĕр,—асăрхаттаратăп хамăн йăнăша,—мотора хăвăртлатăр. Епĕ мотора хăвăртрах ĕçлеттерме пуçларăм. Халĕ тата лармалли паллăкенчен нумай инçете кайса ларасси палараţ, вунă шăнăçран тăххăрĕшĕ карта çине çапăнасшне пĕлтереççĕ.

Епĕ иккĕмĕш çаврăма кайатăп, унтан тин тепĕр хут ларма шухăшлатăп. Халĕ ĕнтĕ газа маларах пуçтаратăп, моторпа туртма шутламастăп. Çĕр мана хирĕç пыраţ. Машинăна, çĕр çине ларма хăтĕрленсе, вăçĕ пăнчă çине кусăрма та вăхăт. Епĕ кунта çĕр, сулахай урапа айне кайса, май пăтаçала хăйăккăн кусса пынине асăрхатăп. Ку сăмсапа анмине пĕлтерет. Çакăн пек анни чухне урапасен покрышкисене çĕмĕрме тата машинăна айккĕсем çине хума пулаţ.

— Есĕр, йĕкĕт, пайан çывăрса тăрапман пулас,—тăрăхласа кулатăп епĕ хамран, виççĕмĕш çаврăма кайнă май.—Есĕр сăмсапа аннине курмастăр.

Çаврăм тунă май, епĕ руԓсемпе хăвăрттăн ĕçлетĕп. Скоԓжемер чăмрашки айкинелле кӳсса хараţ. Вăл епĕ йĕркесĕр хăтланнине палăртаţ. Машинăна кирлинчен ытларах ура патăм. Чăмрашкана прибор варринелле хăваласа пырса, епĕ хама кăна мар, машинăна та йатлама тытăнатăп.

Самоԓот тавра вăркăшакан сывлăш кабинăна кĕрсе тĕрлĕ май çаврăнса сӳрет. Анчах епĕ уи çинчен шухăшламастăп. Епĕ йатлаçатăп. Хам çине те, машинă çине питĕ çиленсе çитнипе епĕ суратăп та. Сурчăк сывлăш йухăмĕпе пĕрле манăн пуç тавра вĕçсе çӳрет. Епĕ вăл мĕнле вĕçнине пăхатăп, çавăнтах сурчăк манăн çамка çине пырса çыпçăнине сисетĕп.

Хĕрелтĕм-ши епĕ? Ăна-кăна пĕлместĕп. Çавăн хыççăн машинăна вăрçма пăрахрăм, кабинăра сурмастăп, руԓ ĕмпе кăмăллăн та вĕркелĕн çеç ĕçлетĕп.

Çамрăк авиаспециалиссем

Аслă лейтенант Шувайĕв йулташ йертсе пыракан подразделенинчи курсантсем пур дисциплинăпа та лайăх вĕренсе пыраççĕ. Çак авиаци чăсĕнче чăваш ачисем те пур. Малтанхи вăхăтра хăшпĕр курсантсем çар ĕçĕнчи хăшпĕр терминсене лайăххăн ăнланаймасчĕç. Командирсем тимлĕн вĕрентме тытăнчĕç. Кун хыççăн вĕренӳре ӳсем тума тытăнтамар, чăваш ачисенчен нумайĕшĕ „отличнă“ вĕренме тытăнчĕç. Пысăк пултарулăхпа вĕреннĕшĕн Г. Çеменăв, Ç. Павлăв, А. Капитонăв йулташсене срук çитиччен вĕрентсе кăларчĕç. Халĕ вĕсем кĕçĕн авиоспециалиссем пулса ĕçлеççĕ.

Хĕрлĕ Çар пирентен пур йенĕпе те пултаруллă çынсем вĕрентсе хатĕрлет. Хăшпĕр çамрăк специалиссен Хĕрлĕ Çар ретне киличченхи пурнăçне илсе пăхар-ха. Блохин йулташ ача çуртĕнче ӳснĕ çамрăк. Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕнче çамата йăваласа пурăннă. Хĕрлĕ Çара килсен тăрăшса вĕренме тытăнчĕ. Ăнаçлă вĕреннине кура ăна отделени командирĕ турĕç. Блохин йулташ хăйĕн отделенине, шкулĕпе илсен, пĕрремĕш вырăна кăларчĕ. Çаксемшĕн ăна премилерĕç, бригадăри хисеп хăми çине сăнне кăларса çакрĕç.

А. Г. Григорйĕв йулташ 1915 çулта çуралнă çамрăк. Хĕрлĕ Çара киличчен тракторист пулса ĕçленĕ. Вăл пысăк машинăсем çинчен малтанах пĕлнĕ, анчах та авиаци техникине пĕлмен. Çак питĕ интереслă техникăна çине тăрса вĕренме тытăнчĕ. Курсран кăтартуллă паллăсемпе вĕренсе тухрĕ. Григорйев йулташ кĕçĕн авиаспециалис йатне илчĕ.

Чăваш ачисенчен кĕçĕн авиаспециалиссем ӳсе çитĕнчĕç Хĕрлĕ Çар пур йенĕпе те пысăк пелӳ параţ. Епĕр çак специаԓнаçа çеçсе илнишĕн тулли кăмăллăн савăнатпăр. Партипе правителствă çĕршыва тăшмансен сыхлама чĕнсен, епĕр хурçă кайăксем çине ларса тухса тăшмана çĕмĕретпĕр.

И. Оԓгашĕв
И. Улайĕв.

Тăван çĕршыва 150.000 ԓотчик парăр

Аслă та пуйан пирĕн социалисăмлă çĕршыв. Çĕршыв пуйанлăхĕ, кашни ĕççыннин телейлĕ пурнăçĕ фашиссене шăл йĕртерет. Пирĕн çĕршыв çине ĕмĕтленекен хура çăхансем тĕнче вăрçине пуçарса йарасшăн. Вĕсем ĕççыннисен телейлĕ пурнăçне çĕмĕрсе тăкасшăн. Анчах вĕсен шухăшĕ нихăçан та пурнăçа кĕме пултараймаçт.

Капиталисăмлă государствăсем вăрçă ĕçне чи мала хурса, вăрçă техникине вăйлатаççĕ пулсан та, çĕр пичĕ çинче чи вăйлă техникă вĕсен мар, вăл—пирĕн, социалисăмлă çĕршывăн.

Пирĕн ԓотчиксем чи çӳле, чи айакка вĕçеççĕ, тĕнчере чи паллă та хăватлă рекордсем тăваççĕ. Авиаци ĕçĕ кашни кун, кашни сехетре вăйланса пыраţ.

Менжинский йачĕпе тăракан савăтри рабочисем: „Тăван çĕршыва 150 000 ԓотчик парăр!“—тесе йышăннă лозунг пурнăçа кĕрсех пыраţ. Пирĕн Шупашкарти герой ԓяпидевский йулташ йачĕпе тăракан аероклуб çак лозунгăн пĕр пайне пурнăçа кĕртет. ԓотчăк шкулăра вăйлă ăмăрту пыраţ. Çак тăрана çитиччен пирĕн ԓотчăк групнă чи малта пыраţ. ԓотчăк шкулăра епĕр пурте производствăран татăлмасăр вĕренетпĕр. Вĕренӳре „отличнă“ тата „хорошо“ паллăсем илетпĕр. Ĕлĕкхи вăхăтра пирĕн атте-аннесем çынсем сывлăшра вĕçнине те илтмен пулсан, халĕ епĕр, йалçынни ачисемех, сывлăшра вĕçетпĕр. Сывлăшра вĕçни—вăл савăнăç. Епĕр чи телейлĕ çамрăксем.

Тăшмансем пирĕн çĕршыв çине тапăнма хăйсан, партипе правителствă пире чĕнсенех, хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр кашни минутра, кашни çекунтра вĕçсе çапса салатма хатĕр тăратпăр.

Учԓотсем: Шадрин, Николайĕв.

ГСО значокĕсем илчĕç

Тойкилт йалсоветĕнчи (Тутаркас районĕ) „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз çумĕнчи Осоавиахим организацийĕ лайăх ĕçлет. Организацийе йертсе пыракан Алексей Павлăв йулташ тăрăшнипе çуркунне 5 колхозник ворошиловăла тĕл перекенсен значок норминие, 22 колхозник ГСО нормине парса значоксем илнĕччĕ. Колхозниксем оборона ĕçне пурте йуратса вĕренеççĕ.

Н. Скворцов.

ăшри вăрçă историйĕнчи чи хăрушă та тискер вĕçевсем пулнă. Барçелонăра 2.116 çын вĕлернĕ, вăл шутран 600-ре йахăн хĕрарăмсем тата ачасем. 5800 çын амантнă. Хула варринчи чи паха квартăлсене ванчăксен куписем туса хунă—1263 çурт çĕмĕрсе тăкнă. Испанин Сагунто йатлă мирлĕ хули çине интервенци вăхăтĕнче Италипе Германи самаԓочĕсем 221 хут пырса бомбăсем пăрахнă.

Италири „Стампа“ хаçат пĕлтернĕ тăрăх, 1938 çулти ийуԓ уйăхĕнче пĕр Итали фашисăмĕн авиацийĕ кăна Ебро йуханщывĕ районĕнче 718600 килограм бомбă пăрахнă тата 40542 пуԓă кăларса йанă.

Китайа хирĕç кĕрешĕве Йапони ыҫлайăх пысăк сывлăш флочĕ йачĕ, вăл сыхлăхсăр хуласемпе йалсене те, сывмаррисене те, хĕрарăмсене те, ачасене те, культурă памĕтникĕсене те шеллесе тăмасţ. Пĕлтĕрхи йулăшки уйăх хушшинче кăна Йапони авиацийĕ Китайри 275 уйĕс тата 16 провинци çине 2472 хут вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă. Мирлĕ хуласемпе йалсем çине 33 пин ытла бомбăсем пăрахнă. Çавăн пек сывлăшран бомбăсем пăрахнипе, тулли мар çиеденисем тăрăх, 16532 çын вилнĕ тата 21752 çын аманнă.

Фашисла çĕршывсем ăçăхса кайсах вăрçа хатĕрленеççĕ. Испанири тата Китайри вăрçăсен опытне шута илсе, вĕсем çар авиацине ӳстерсен çине уйрăмăнах çаврăнса пăхаççĕ. 1937 çулта 56 капиталисла çĕршывсенче авиаци ваԓăн укçа йарасси пĕтĕм хисепĕ 1750 мĕлйун доллăра çитнĕ, вĕсенчен 1400 мĕлйунне çар авиаци ваԓăн йанă. Уйрăмăнах йулашки пилĕк çул хушшинче Германи, Итали тата Йапони авиацийĕ вăйлăн ӳснĕ. 1933 çулта, „Плановое хозяйство“ (1938 çул, 4-мĕш №) журнал çинче пичетленĕ тăрăх, Германире—250, Италире—1100, Йапонире—1350 самоԓот пулнă. 1937 çулта Германире—4000—4500, Италире—3000—3500, Йапонире—3000 çар самоԓочĕсем пулнă. Çак цифăрсем ĕнтĕ пулас вăрçăра епĕр вăйлă противникпе хирĕç, пысăк сывлăш флочĕ тытакан противникпе хирĕç пулассине кăтартса параççĕ.

Пирĕн оборонă наркомĕ Совет Сойузĕн маршалĕ йуратнă Ворошилăв йулташ çапла каларĕ: „Кам сывлăшра вăйлăрах вăл пирĕн вăхăтра пур йенчен те вăйлă“. Фашисăмă хирĕç пулас тытăçусенче лайăх авиаци промышленнăçĕ, лайăх хатĕрленĕ çĕршер пин ԓотчиксем, штурмансем, техниксем, механиксем, радиссем, парашӳтиссем тата сывлăш снайпĕрĕсем тытакан çĕршыв вăйларах пулаţ.

Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче епĕр малта тăракан авиаци промышлĕннăçĕ туса хутăмăр. Вăл лайăх самоԓотсем кăлараţ, малашне татах та лайăхрах самоԓотсем кăларĕ. Çавăн пекех пирĕн ԓотчиксен составĕн питех те паха кадрĕсем пур.

Пирĕн авиаци социалисăмлă промышлĕннăçа, йалхуçалăхне, наукăпа культурăна атлантарас ĕçре мухтанлă вырăн йышанса тăраţ. Хăвăтлă та хăвăрт вĕçекен самоԓотсем, пĕтĕмешпех совет савăчĕсенче тата совет материалĕсенчен тунăскерсем, пассажирсене кăна мар тата промышлĕннăç предприйатисем валлиԓ чĕре таварсем те турттарса çӳреççĕ, тĕрлĕрен производствăлă грузсем тата хăвăрт пăсăлакан йапаласене турттараççĕ, çав шутрах медицинă препарачĕсем, вакцинăсем тата сывăрăткăсем те. Самоԓотсем çинче пирĕн аслă çĕршывăн инçетри районĕсене çимĕççем, кулленхи кирлĕ таварсем тата експăрта импăрт таварĕсене турттараççĕ. Граждан авиацийĕ йалхуçалăх вредитĕлĕсемпе, сиенчĕр саракан вăрăм тунасемпе тата вăрмансенчи пушарсемпе кĕрешес ĕçре пысăк пулăшу параţ. Санитари самоԓочĕсем чирлисене тата амансене хулари пуԓницăсене турттарса пыраççĕ. Пирĕн авиаци наукăлă тĕллевсемпе те анлăн уса кураţ. Самоԓотсем çинче хĕвел тĕттĕмленнине, Подкаменнăй Тунгускă районне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе експедицисем туса ирттереççĕ. Сывлăш çулĕсен вăрăмĕшĕпе тата грузсем турттарса çӳренин пысăкĕшĕпе совет граждан авиацийĕ хальхи вăхăтра пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вырăнта.

Совет авиацийĕн кунĕнче пирĕн хамăрăн çитĕнӳсене кăна палартмала мар, çавăнпа пĕрлех Хĕрлĕ Çарăн тата унăн сывлăш çар флочĕн çапăçу хăватне малашне те тĕреклетесси çинчен вирлĕн çавăрăнса пăхмала.

Пирĕн йалавах капиталисăмлă йĕри-тавралăх çинчен асра тытмала, фашисла агрессăрсем СССР çине, хăйсен агенчĕсемпе—троцкисла-бухаринла тата ытти шпионсемпе, диверсантсемпе тата çывăхлăрсемпе уса курса, тапăнма урса кайсах хатĕрленнине асра тытмала. Пирĕн инçе çăнăхсăр ырăх тупăнчĕ вăрçăн хăрушă пĕлĕчĕсем вăйлăран та вăйлăрах пуxăнса пынине манма йураманат.

Пулас вăрçăра епĕр противникпе çĕр çинче тата тинĕс çинче кăна мар, çавăн пекех сывлăшра та хирĕç пулатпăр. Çавăнпа та пире хăйулă ԓотчиксем, пилотсем, штурмансем, парашӳтиссем, механиксем тата сывлăшри стрелоксем нумай хисеплĕ çарĕ кирлĕ. Çак задачăна ăнăçуллăн пурнăçа кĕртме пире питех те паха совет çамрăкĕсем пулăшаççĕ, вĕсенчен чи лайăх пайĕ пирĕн вĕçев шкулĕсенче авиацин сложнăй техникине ăнăçуллăн алла илсе пыраţ. Халĕ комсомолăн ԓотчиксен тата ԓотчик-сăнавçăсен шкулĕсене комсомолри чи лайăх çамрăксене вĕренме йарасси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмала тата вăл ĕçре пулăшмалла. Çак тĕлĕшре Осоавиахим умĕнче те пысăк задачă тăраţ. Унăн чи кĕске вăхăтра ԓотчиксемпе техниксен составне хăвăрттăн хатĕрлеме май туса, ĕçе анлăн сарса йамала. Паллах ĕнтĕ, аероклубсенче малтанлăха учԓотсем хатĕрлесси вĕрентмелли самоԓот çинчех чăрăнса ларма мар. Осоавиахимăвĕçсен кучухнеки хăвăрт вĕçекен авиацине те алла çавăрса илмелле.

Комсомол умне парти пысăк задачă кăларса тăратрĕ—çунатлă çынсен ăрăвĕ пулмала. Пĕтĕм тĕнчери авиаци техникинче малта тăраканнишĕн пурри пурте пирĕн авиацире пулмала. Пĕтĕм тĕнчипе пурнисчĕн те инçе, çӳлĕ тата хăвăртрах вĕçесси—çакăн пек пирĕн совет çĕршывĕнчи мухтавлă çамрăксене хавхалантарма тивĕçлĕ задачă.

А. Д. Локтионăв.

Иккĕмĕш рангри комкорă, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн Сывлăш-Çар вăйĕсен начаԓникĕ.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнче июлĕн 26-мĕшĕнче республиканĕçсем Ебро йухансыве урлă каçса наступлени-тума пуçларĕç, вара пăлхавçăсен Левант фронтĕнчи вăйĕсене ирĕксĕрех Ебро фронтне куçарма тиврĕ. Çавăнтанпа ĕнтĕ республиканĕçсем пуçарăва пĕрмайах хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Левант фронтĕнче пăлхавçăсен наступленине чарса лартнă. Ку фронтра республиканĕçсем контрнаступлени пуçласа йулашки ернесенче чылай паха высотасемпе пунктсем туртса илнĕ.

Ебро фронтĕнче тăшман республиканĕçсем кĕрешсе илнĕ территорине кайала туртса илесшĕн тăрăшат, анчах тăшман хĕсние республиканĕçсем ăнăçлăн çĕмĕрсе пыраççĕ.

Левант фронтĕнче кайала тытса ывăтнă пăлхавçăсемпе интервентсем центрти фронтăн Естремадурă участкинче республиканĕçсен позицийĕсем çине хайаррăн тапăнаççĕ. Унта вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Пур фронтсенче те пăлхавçăсемпе интервентсене пысăк çухатусем кўреççĕ.

(ТАСС).

Пăлхавçăсем халăх пурлăхве Германипе Италине пана

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, фашисла пăлхавçăсем Испанин çурçĕр йенче туртса илнĕ пит нумай Баск судносене, вĕсене вăрçă хатĕрĕсем панăшăн тата „вăрçăра пулăшнăшăн" Германипе Италине пана. Çав суднăсен хисепĕ 30 таранах шутланат. Халĕ çав суднăсен йачĕсене улăштарнă, вĕсем Германи йе Итали йалавĕпе ишсе çўреççĕ.

(ТАСС).

Франци пăрахутне шыва путарнă

ЛОНДОН, августăн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Гибралтарти корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Францин „Артау" йатлă пăрахучĕ Гибралтартан кăнтăр-хĕвелтухăçнеле 35 милĕре минă çине пырса тăраннă та шыва путнă. Пăрахут команди çăлăнса йулнă. Пăрахут Марçелрен Казабланкă (Францин çурçĕр-хĕвеланăç ĕенчи Африкă) патнеле кайнă пулнă. Анчах та,—тесе асăрхаттарат корреспондент, — пăрахут екипажĕн членĕсем пăрахут минă çине пырса тăранни пирки иккĕленеççĕ, ăна Испанири пăлхавçăсен суднисем торпедă йарса путарнă пулмала тесе шутлаççĕ.

Англи пăрахутне шыва путарнă

ЛОНДОН, августăн 15 мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Италин 5 бомбардировщикĕ, Валенси çине тапăнма вĕççе пырсан, Англин „Ноэмиджулия" йатлă пăрахучĕ çине темиçе бомбă та пăрахнă, пăрахут Валенси портĕнче тăнă пулнă. Çакăн пек бомбăсем пăрахса тапăннипе пăрахута чылай сийен тунă, вара вăл шыва путнă.

Шанхайра вăрçă ĕçĕсем пуçланнăранпа çулталăк çитнĕ

Шанхайра вăрçă ĕçĕсем пуçланнăранпа çулталăк çитнĕ май, августăн 13-мĕшпе 14-мĕшĕнче Хаҥкоу, Учан тата Хаҥйан хулисенче массăлă митингсем пулса иртнĕ. Хаҥкоура гоминдан организацийĕ пухнă митингра тĕрлĕрен обшчĕствăлă организацисенчен икĕ пин представителе йахăн пулнă. Митинг Чан Кай-ши патне тата фронтсенче çапăçакан офицерсемпе салтаксем патне салам йанă. Кинотеатрсенче вăрçă çинчен фильм кăтартаççĕ. Августăн 14-мĕшĕнче каçхине обшчĕствăлă паркра хуçарсемпе массăлă шестви пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Йапони авиацин тискер ĕçĕсем

ХАҤКОУ, августăн 16-мĕш. (ТАСС). Августăн 13-мĕшĕнче Йапонин 16 бомбовозĕ Йансиҥ хули çине (Хубей провинцин хĕвелтухăç пайĕнче) тискеррĕн бомбăсем пăрахнă. Йапони самолйочĕсем икĕ хутчен пырса бомбăсем пăрахнипе мирлĕ пурăнакан 500 çын вилнĕ тата 800 çын аманнă. Бомбăсенчен нумайĕшне хула центрĕ çине пăрахнă. Бомбăсем тивнипе вăтам шкул, америкă чиркĕвĕ, хаçат редакцийĕн çурчĕ тата ытти çуртсем те ишĕлнĕ. Вут хыпарса йăракан бомбăсем тивнипе пушарсем тухнă.

16,6 мĕлйун çĕнĕ учебниксем

Мускаври çав тери пысăк пĕрремĕш кăтартулă типографи халь учебниксем пичетлес тĕлĕшпе ĕçлет. Çĕнĕ вĕренў çулĕ пуçланнă тĕле пысăк заказа пурнăçа кĕртмеле—пуçламĕш тата вăтам шкулсем валли 20.400 пин учебник пичетлессе кăлармала. Типографи государствăн издательствисен кĕнекисемпе суту-илў тăвакан пĕрлешĕвне—КОГИЗ-а 16.600 пин çĕнĕ учебниксем панă та ĕнтĕ. Çак уйăх хушшинче 13 тĕслĕ учебниксем 3.475 пин екземпляр кăларнă.

(ТАСС).

Хĕрарăмсен активлăхĕ

Шупашкарти çĕнĕ строительствăра ĕçлекен рабочисен коллективĕнче хĕрарăмсем те сахал мар. Вĕсем хушшинче стахановла тухăçлăхпа ĕçлекенсен хисепĕ кунсерен ўсет. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Чапрайĕва йулташ бригади пысăк тĕслĕхсем парат. Унăн бригади хăйĕн нормисене йалан тултарса пырат.

Бригадăра нормăна 200 процент тултаракан стахановкăсем 10 çын. Вĕсен шутĕнче А. Тарасăва, Поповă, Козловă, Петровă, Игнатйĕва, Николайĕва тата ыттисем те.

Халĕ Чапрайĕва йулташ йертсе пыракан бригадăн членĕсем пĕтĕм бригадăна йалан стахановла ĕçлекен тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

В. Д.

9 çул почтальйонра

Анат Сăнарти (Йетĕрне р.) Степан Вожарăв 9 çул почтальйонра ĕçлет. Ç. Вожарăв йулташ çўрекен „Çĕнĕ çул" колхозри 87 хуçалăх 185 екземпляр тĕрлĕрен хаçат-журнал илсе тăрат. Вăл çырăннă хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхатра çитерет. Тырпула пухса кĕнĕ вăхăтра, колхозниксене каннă вăхăтра хаçатсем вуласа парат. Хăйпе пĕрле йаланах маркăсемпе конвертсем илсе çўрет. Вожарăв йулташ почтальйон ĕçне йуратат.

М. Шлыганăв.

Техникă выставки

Августăн 25-мĕшĕнче Шупашкарта ачасен техникла станци çумĕнче ачасен республикри техникă выставки уçăлат. Ку выставкăна халĕ Елĕк, Йелчĕк, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпў районĕсенчен ачасем тунă експонатсем — фото-альбомсем 4, радиоприйомниксем 8, фотоапаратсем 6, авиомоделсем 19 илсе килнĕ. Августăн 20-мĕшне республикри ытти районсенчен те илсе килеççĕ.

Халĕ республикри ачасен техникла станцинчи пионерсем 20 ытла авиомоделсем турĕç. Вĕсем хăйсен авиомоделĕсене августăн 18-мĕшĕнче авиаци кунĕнче сывлăшра вĕçтереççĕ.

В. Васильĕв.
М. Йакавлĕв.

Перепис çинчен ăнлантараççĕ

ИШЛЕЙ. Шетмĕпуç йалсоветĕнче 1939 çулхи халăх переписне хатĕрленеççĕ. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕ вăхăтĕнче ĕçленĕ агитаторсем халĕ йалсоветри пур колхозсенче те ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Пĕтĕм Союзри халăх переписне иртерес пирки йышăннă постановленине ăнлантарчĕç.

Переписе лайăх иртерес тесе йалсоветĕнче переписре ĕçлеме чи шанчăклă çынсене уйăрнă. Переписре ĕçлеме уйăрнă çынсем халĕ халăха участкă кĕнекисем çине тепĕр хут тĕрĕслесе çырса хураççĕ.

А. Çмирнов.

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: А. А. Йастребăв командир отрйачĕн спорт самолйочĕсем сывлăшри парада хатĕрленеççĕ.

А. Межуйĕв фото-ўкерчĕкĕ (Союзфото).

Авиаци кунĕ Шупашкарта

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем массăлă халăх праçникне—Авиаци кунне хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçре пысăк çитĕнўсем тунипе кĕтсе илеççĕ. Социалисăм авиацийĕ мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен, герой лётчиксем т. ыт. çинчен предприйатисемпе учрежденисенче калаçусем, докладсем пулса иртеççĕ.

Çĕршер, пиншер çынсем Осоавиахим кружокĕсенче çар техникине вĕренеççĕ, çамрăксем самолётпа вĕçме, Ворошилăв пек тĕл персе тивретме, сывлăшри тата химилĕ тапăнуран сыхланма вĕренеççĕ.

Августăн 17-мĕшĕнче мĕн пур хапрăксемпе савăтсенче, учрежденисенче, организацисенче рабочисемпе служăшчисен пухăвĕсем пулса иртрĕç, вăл пухусенче совет авиацин çитĕнĕвĕсем çинчен докладсем итленĕ.

Августăн 18-мĕшĕнче кăнтăрла 12 сехетре Хĕрлĕ плошчĕтре хулари ĕççынисен митингĕ пулат.

Пайан каçхине 7 сехетре Крупскайа йачĕпе тăракан сатра социалисăм çĕршывĕн авиацийĕ тунă çитĕнўсем çинчен доклад пулат.

Крупскайа йачĕпе тата Чăваш АССР 15 çул тултарнă йатпа тăракан сатсенче массăлă гуляньисем пулаççĕ, концерт параççĕ.

Комсомолкă пилот

Хурçă кайăк кĕрлет
Кантăрла йе çĕрле.
Комсомолкă пилот
Çўлте тĕрĕ терлет.

Йуншăн тухнă çăхан
Тўпере йарăнсан—
Пирĕн харсăр пилот,
Комсомолкă пилот—

Тимлĕн те хайаррăн
Хирĕçле вĕçтерĕ,
Тăшмана пĕтерĕ!

Çемен Йелĕм.

Авиаци литературин выставки

Шупашкарти М. Горький йачĕпе тăракан тĕп библиотекăра авиаци ыйтăвĕсем тăрăх çырнă литературăсен выставкине организациленĕ.

Выставкăна совет авиацийĕ çинчен çырнă 20 кĕнеке ытла тăратнă. Кунта—М. Водопйанăвăн „Сухапуç патĕнчен самолёт çине", Виленскин „16 кун полюс çинче" кĕнекесем, самолётсем мĕншĕн тата мĕнле вĕçни çинчен ăнлантарса паракан кĕнеке пур. Унтах совет авиацинчи паллă çынсен фотоўкерчĕкĕсене те тăратнă.

Библиотекăна вулама пынă çынсем авиаци литературин выставкипе питĕ интересленеççĕ.

И. Е.

„Епĕр пĕтĕмпех хатĕр..."

Пайанхи куна пирĕн республикăри чылай районсем çĕнĕ вĕренў çулне тĕплĕн хатĕрленсе çитеймен-ха.

„Епĕр çĕнĕ вĕренў çулне пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнĕ. 1938—1939 вĕренў çулĕнче шкулсенче пурĕ 6072 ача вĕренмеле. Вĕренў çулне ыранах пуçлама хатĕр," тесе пĕлтерет Çутĕç Халăх Комиссариатне Тăвай районĕнчи çутĕç пайĕ.

Мухтанмали нимĕн те çук. Шкулсем валли учительсем çитмеççĕ. Клас журналĕсем пурĕ 8000 ытла кирлĕ. Тăвайсен вĕсем пĕрре те çук.

Йĕпреçре вăхăта канашлусем туса ытларах иртереççĕ. Районри чылай шкулсем вĕренў çулне хатĕр мар. Йĕпреçри вăтам шкулта капиталлă ремонт тумасан вĕрентме май çук. Хĕлле пулсан классенче чăтма çук сивĕ пулат, кĕркуннехи йĕпе çанталăкра классене шыв анат. Туллимар вăтам шкул çуртне 1936 çултах тума тытăннă, пайанччен те туса пĕтереймен-ха. „Материал çук, бани укçа памаст"—тесе лараççĕ Йĕпреçсем. Йĕпреç районĕнчи банк пуçлăхĕ Йегорăв йулташ шкул строительствине чăнах та ним чухлĕ те хакламаст.

Пăрачкав районĕнче 6 шкула йусамала. Кладбишчĕнскри вăтам шкул директорĕ Захарăв июлĕн 8-чех шкултан тухса кайнă та, кайала халĕ те пыман. Хăй кайни çинчен вăл районти çутĕç пайне те пĕлтермен. Çавна пула Кладбишчĕнскри вăтам шкул вĕренў çулне хатĕрленмĕ халĕ те тытăнман-ха.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче ĕç урăхларах. Кунта кăçал 52 шкулта пурĕ 8455 ача вĕренмеле. Шкулсем валли учительсем çитĕлĕклĕ. Шкулсенче ремонт августăн 20-мĕшĕччен пĕтмеле. Хĕлле валли 2880 кубла метр вутă туртарса хатĕрленĕ.

Арк. Нестĕрăв.

Çулталăкри плана тултарнипе кĕтсе илеççĕ

Деткомиссин Шупашкарти хапрăкĕнчи рабочисемпе инженерла техникла работниксем стахановла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнине хатĕрленес ыйтупа, августăн 14-мĕшĕнче пуху туса иртерчĕç. Пуху хапрăкăн ку таранччен ĕçĕсене тĕплĕн тишкерсе тухрĕ. Савăт августăн 10-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 92,3 процент тултарнă.

Пухăва пынисем пурте пĕр кăмăлпа стахановла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнине çулталăкри плана пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илме йышăнчĕç.

Халĕ хапрăк коллективĕ хăйĕн обйазательствине ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырат. Стахановла йухăм вăйланнă çемĕн вăйланат. Пайанхи куна хапрăкăн 100 рабочийе пĕрлештерсе тăракан коллективĕнче стахановĕçсемпе ударниксем 49 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем икшер нормă тултараççĕ. Чернышевпа Долгорукăва йулташсем час-часах 250 процент тултарса ĕçлеççĕ. Стахановĕçсемпе ударниксен шутĕнче тăманнисен хисепĕнче те плана тултарса ĕçлекенсем сахал мар. Кусене шута илсен, хапрăк коллективĕ хăй панă сăмаха пурнăçа кĕртесси уççăнах курăнса тăрат.

Зимин.

Вунăкунлăхри плана 191 процент тултарнă

СĔНТĔРВĂРРИ. Халхи вăхăтра хулари предприйатисенче, промысла ертелĕсенче стахановла йухăм пуçланни виçĕ çул тултарнине хатĕрленес ĕç хĕрўлĕн сарăлса пырат. Рабочисем, бригадăсем ăмăрту договорĕсене тĕрĕслеççĕ, ку таранччен ăмăртăва хутшăнманнисем ăмăртса ĕçлеме тытăнаççĕ. Стахановла йухăм та сарăлсах пырат.

Социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма вăйлатсах пынипе, чылай предприйатисем, кĕске хушăрах пысăк ўсĕмсем тунă. Деткомиссин савăчĕ август уйăхĕн малтанхи вунăкунлăхĕнчи плана 191 процент тултарнă. Ку савăтри стахановĕçсем Копылов, Зимин йулташсем йалан икшер нормăран кайа мар тултарса пыраççĕ. Вĕсем паха, тухăçлă ĕçĕсем рабочисен активлăхне çĕклесе пыма çул уçса параççĕ.

Вăйлă йĕтĕн, кантăр

Йермошкăри (Вăрнар р.) Ка... нин йачĕпе тăракан колхоз çул... ренех вăйлă тухăçлă сўс-кантăр ... са илет. Кăçалхи кантăр пĕлт... хинчен нумай тухăçлăрах та па... рах. Кăçал колхоз 5 гектар çи... йĕтĕн, 8 гектар çинче кантăр а... хăварнă. Йĕтĕне татса, пултар... çерем çине сарнă. Кашни гект... кантăр акнă вырăнта 2100 шер ... рăм пуса татнă. Вĕсене те шы... хутса пултарнă.

Кантăр вăйлăн çитĕнчĕ. У... тăршшĕ икĕ метра йахăн. Ирт... çулта гектартан шăммипе 36 це... нер кантăр туса илнĕ пулсан, ... çал—50 центнер пулат.

Йĕтĕн тата кантăр тăвас тĕлĕ... пе колхозра йатарласа уйăрнă б... гадă ĕçлет. Çак бригадă пĕлт... те, çавнашкалах кăçал та вă... кантăршăн тата йĕтĕншĕн тăрăш... ĕçлерĕ.

А. Владимирăв.

Кĕрхи тырăсене акма тухрĕç

Чăваш Çĕрĕç Халăх Комиссари... чĕ йышăннă тăрăх, Иелчĕк ра... нĕнчи колхозсен кĕрхи тырăсе... августăн 17—23-мĕш хушшин... акмала. Иелчĕк районĕнчи ко... хозсем пурте августăн 17-мĕш... че кĕрхи тырăсене акма тухр... „Хунав" колхоз акмали участк... сене лайăх çемçетрĕ. Пĕтĕмпе... суртлă, вутпуççирен чўхенĕ вă... лăхсене çейалкăсемпе акса хăв... рат. Ку колхоз кĕрхи тырăсе... августăн 18-мĕшĕнче пĕтĕмпех а... са пĕтерет. Пурĕ кĕрхи тулă... ыраш 310 гектар çинче акмала.

Крупскайа йачĕпе тăракан кол... хоз та кĕракине пысăк ăнăçлăхп... иртерет. Вăрлăхсене пĕтĕмпех вут... пуççирен чўхенĕ. Çейалкăсемп... туллин усă кураççĕ.

Кăçал колхозсенче кĕрхи тул... акса хăварма пин центнер вăрлă... çитмесчĕ. Халь ку хăрушлăхран х... тăлтăмăр. Кĕрхи тулă вăрлăхн... çителĕклĕ таран Тутар республи... кĕнчен кўрсе килтĕмĕр.

Агроном Шчипцов.

Тўрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатра июлĕн 21-мĕшĕнче пичетленсе тухн... „Йалхуçалăх налогне хурас йеркесем çинчен" Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановленин 9-мĕш статйинчи пĕрремĕш абзацра... „доходсен хисепне районсем тăрăх çакăн чухлĕшер кĕртмеле мар",—тесе пичетленĕ. Ана... „доходсен хисепне районсем тăрăх çакăн чухлĕшер кĕртмеле",—тесе вуламала.

Пулни-иртнисем

● Августăн 4-мĕшĕнче Пелникăв йалĕнчи (Шупашкар р.) М. К. Куçмин, халь анчах тĕрмерен ларса тухнăскер, Шупашкарти макарон хапрăкĕнчи рабочисен обшчежитине çĕрле чўречерен кĕрсе, 1000 тенке йахăн тĕрлĕрен йапаласем вăрласа тарнă. Халĕ Куçмина тытса арестленĕ. Вăрланă йапаласенчен хăшне-пĕрне йытăпа шыраса тупнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ

ЧĂВАШСЕН
Государствă Педагогикă
ИНСТИТУЧĔ

отличниксене тата урăх аслă шкулсенче испытани тытнă хыççăн вырăн çук пирки вĕренме илменнисене

институтăн истори тата чĕлхепе литературă факультечĕсене вĕренме илет.

Зайавлени памалли (çырса йе телеграфпа) йулашки срук çак çулăн çенийабĕрĕн 5-мĕшĕ.

Дирекци.

3—1

Чăвашсен Педагогикă институтне заочнă вĕренме кĕрекенсене пĕлсе тăма

Вĕренме кĕрес текенсем зайавленийе пĕрле кăçалхи июлĕн 24-мĕшĕнче тухнă „Красная Чувашия" хаçатри пĕлтерўре кăтартнă документсене йарса памап пулсан, çав документсене августăн 25-мĕш тĕлне йарса памасан, йышăнав результачĕсем [illegible] пултараççĕ.

Дирекци.

Чăвашсен Педагогикă Институтне заочнă сектăрта ĕçлеме
МАШИНИСТКĂ ТАТА СЕКРЕТАР
кирлĕ

Ĕçукçи килĕшўллĕ тĕрĕс.

Дирекци.

Хĕрлĕ Çарти чăвашсем вĕренўре

№ дивизинче пирĕн орденлă Чăваш республикĕнчен килнĕ нумай çамрăксем пурăнаççĕ. Кашни подразделенинче чăвашсене тĕл пулма пулат.

Чăваш ачисем çар техникине, политикă ыйтăвĕсене вĕренес ĕçре малта пыраççĕ. Стахановла меслетсемпе анлă усă курса, ăмăрту договорĕсене тĕрĕслесе, вĕренўре пысăк тĕслĕхсем кăтартаççĕ, хăйсен пĕлўлĕхĕсене ўстерсе пыраççĕ.

№ подразделенинче Хуçамакасси (Ишлей р.) йалĕнче Гаврил Маçтерăв йулташ пурăнат. Вăл Хĕрлĕ Çарта хăйĕн пĕлўлĕхне ўстерес йĕнĕпе тăрăшса ĕçлет. Иланах хаçат журналсем, художествăлă произведенисем вулат. Халĕ вăл политрук заместителĕ пулса ĕçлет.

Елисей Иванов (Елĕк районĕнчен) çар кунсенче „отличнă" паллăпа полкри шкула пĕтерчĕ. Вăл Хĕрлĕ Çара киличчен комсомолта пулман. Иртнĕ çул комсомола кĕчĕ, халĕ вăл парти кандидатне кĕчĕ.

„А" чаçра Патăрйел районĕнчен килнĕ И. Игнатйĕв йулташ пурăнат. Игнатйĕв йулташ вăрçă техникине алла çавăрса илес майпа кашни кун тăрăшса вĕренет. Вăл та ыттисем пекех полкри шкултан „отличнă" паллăпа вĕренсе тухрĕ. Унăн орудийĕ чаçра тĕрĕс вырнаçуллăхăн тата чи çўле персе тивретессипе малти вырăн йышăнчĕ.

Халĕ Игнатйĕв йулташ йапони самурайĕсене хирĕç ответлесе, нумайлăха Хĕрлĕ Çара йулма ыйту пачĕ. Командир унăн ыйтăвне йышăнчĕ. Игнатйĕв йулташа кĕçĕн лейтенантсен курсне вĕренме йачĕç.

Политрук Абаçейĕв.

Хĕрлĕ Çартан килнисем колхозсенче

Йелчĕк районĕнче Хĕрлĕ Çартан килнĕ çамрăксем колхозниксем шанса панă ĕççене аван пурнăçласа пыраççĕ. Кўлпуç йалĕнчи колхозра ĕçсем питех те йапăх тăратчĕç. Кунта колхоз пурлăхне тирпейсĕр тытни, колхоз ĕçне шанса панă çынсем ĕçкĕçикĕре çўресе ĕçе йапăхтарни вĕçĕмсĕр пулса пынă. Халĕ ку колхозра Хĕрлĕ Çартан килнĕ комсомолец Карзаков йулташ колхоз председателĕ пулса ĕçлет.

Карзаков йулташ ĕçлеме пуçланăранпа колхозра нумай çитĕнўсем пулчĕç. Колхозниксем колхоз пурлăхне тирпейлĕ тытма вĕренчĕç. Колхоз председательне улăштарса тăрасси те пĕтрĕ.

Кўлпуç колхозĕ халĕ Хăвăлçырма колхозĕпе ăмăртса ĕçлет. Хуçалăхпа политикăлла кампанисене вăхăтра пурнăçлас ĕçре Кўлпуç колхозĕ йалан малта пырат. Колхоз çуллен çул вăйлăланат. Халĕ государствăна аш-какай парса автомашинă илчĕ.

Районра çакăн пек çамрăксем татах нумай. Акă, Тайапа Ентринчи Шчипцов, Аслă Йелчĕкри Головин йулташсем те Хĕрлĕ Çартан килнĕренпе колхоз председателĕсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем Хĕрлĕ Çартан нумай пĕлў илсе килчĕç. Халĕ те хăйсен пĕлўлĕхне ўстерес тĕлĕшпе аван ĕçлесе пыраççĕ. Головин йулташ колхоз кăйрĕсен шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ. Парти кандидатне кĕчĕ.

Кун пек тĕслĕхсем Йелчĕк районĕнче пĕрре çеç мар. Ку ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ Çар чăн-чăн политикă шкулĕ пулса тăнине кăтартса парат.

Сахалкин.

Уполномоченный Чувашглавлита № 441
Гор. Чебоксары. Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 663.